ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Август
30
вырсарникун
№ 1[illegible] (7079)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Таван çĕршывра (1 стр.).
Кучухнехи хăватлă юхăм (1 стр.).
Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен йышăннă закон (2 стр.).
РСФСР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 130-мĕш статьине улшăнусем кĕртесси çинчен йышăннă закон (2 стр.).
УЧИТЕЛЬСЕН АВГУСТРИ КАНАШЛАВĔСЕМ:
В. Плешков.— Вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатар.
Н. Никитин.— Политехникăлла вĕренӳ ĕçне тивĕçлипе хакламалла (3 стр.).
П. Коваленко.—Шахтерсем валли (3 стр.).
Ф. Абакумов.—Кĕрхи çĕртмене вăхăтра тăвар (3 стр.).
С. Иванов.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
ООН Генеральнăй ассамблейин çиччĕмĕш сессийĕ (4 стр.).
Студентсен Пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ (4 стр.).
Ардальон Игнатьев—спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ (4 стр.).

Выльăх апачĕ хатĕрлесси— паян тумалли чи кирлĕ ĕç

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви куллен тăрăшнипе пирĕн социализмла ял хуçалăхĕ хăйĕн аталанăвĕнче пысăк çитĕнӳсем турĕ. Колхозсен общественнăй хуçалăхĕ ӳссе тĕрекленчĕ, ял хуçалăх продукцийĕ туса кăларасси те пĕрмай ӳсет.

Анчах ял хуçалăхĕн чылай отраслĕсем, сăмахран, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕç çаплипех юлса пыраççĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ халăх ыйтнине чи тулли тивĕçтерме кирлĕ чухлĕ аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата ытти çавнашкал продуктсем хатĕрлеймест-пĕр-ха. Вăрçă хыççăн выльăх хисепне малтанхи виçене çитерес тата малалла ӳстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Кашни колхозрах выльăхсен хисепĕ нумай ӳснĕ, çапах та çав ӳсĕмĕн хăвăртлăхĕ ытла та çителĕксĕр. Выльăхсен тухăçлăхне ӳстерессине илес пулсан, ку ĕç пачах япăх пулса пырать. Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç колхозăн пысăк тухăçлă тата пысăк тупăшлă отраслĕ пулмалла, анчах нумай колхозсенче вăл çавăн пек пулса тăман-ха. Çакă колхозсен экономикинче те палăрать, халăх хуçалăхне те сиен кӳрет.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре татăклă улшăну тума мĕн чăрмантарса тăчĕ-ха? Тĕп чăрмавсенчен пĕри выльăх апачĕ çителĕксĕр хатĕрлени пулать. Апат çитмен пирки нумай колхозсем, уйрăмах хĕл кунĕсенче, пысăк йывăрлăхсем тӳсеççĕ, çавна пула выльăх-чĕрлĕхĕн хисепĕ те час-часах нумай чакса каять, выльăхсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре те улшăнусем тума майсем пулмаççĕ.

Партипе правительство пирĕн умна çакăн пек задача кăларса тăратрĕç: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç юлса пынине хăвăртрах пĕтермелле, выльăхсенчен илекен тупăша хальхинчен темиçе хут ытларах ӳстермелле, выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатмалла. Çак задачăна ăнăçлă пурнăçлас тесен, кашни колхозра выльăх апачĕ çулсеренех çителĕклĕ туса хума çирĕп никĕс тумалла. Выльăх апачĕ кирлĕ чухлĕ хатĕрлемесен, ĕç ăнăçлă пуласса кĕтме çук. Выльăх апачĕ хатĕрлесси паян тумалли питĕ кирлĕ ĕç. Ку ĕçе кĕрхи куна хăварни кайран тӳрлетме май çук пысăк инкексем патне илсе пыма пултарать.

Кăçалхи пек лайăх условисенче те утă-улăмпа сĕтеклĕ апат кирлĕ чухлĕ хатĕрлеймесен, çавăн пек колхозсен, районсен тата МТС-сен руководителĕсем пирки мĕн каламалла пулать-ши? Колхоз руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине пӳрне витĕр пăхнă пирки кăна кăçал выльăх апачĕсĕр тăрса юлни пулма пултарать. Çавăн пек хăрушлăх палăрма пуçларĕ те ĕнтĕ.

Тĕслĕхшĕн улăм-утă хатĕрлес ĕçе илсе пăхар. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне Улатăр районĕнчи колхозсем комбайнпа вырнă улăма пухмалли плана мĕн пурĕ те 27 процент ытларах кăна тултарнă. Елчĕк районне илес пулсан, кунта вара пилĕк пин гектар çинче комбайн пăрахса хăварнă улăм уй-хирте çапаланса выртать. Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă, Тăвай районĕсенче те комбайнпа вырнă хыççăн улăма пуçтарса капана хывмаççĕ, çавна пула тăкаксем нумай тăваççĕ, выльăхсемшĕн паха апата сая яраççĕ.

Силос хывмалли плана тултарас ĕç те питĕ çителĕксĕр пулса пырать. Республикăри районсенчен пĕр Чкаловски районĕ кăна силос хывмалли плана 93 процента яхăн тултарма пултарчĕ. Ытти районсенчен нихăшĕ те плана 30—60 процентран ытла тултарман. Пĕтĕм республикипе илсен, плана августăн 25-мĕшĕ тĕлне 46 процент çеç тултарнă. Етĕрнепа Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсем, плана виççĕмĕш пайĕ чухлĕ те пурнăçламан. Чылай районсенче, сăмахран Çĕмĕрле, Шăмăршă районĕсенче силос тума аван культурăсене вăхăтра пухса кĕртмеççĕ. Нумай колхозсем улăх-çарансенчи, сырма-çатрасенчи силос хывма юрăхлă курăксемпе усă курмаççĕ.

Утă çулас, улăм пухас, силос хывас ĕçсене ăнăçлă туса пыма республикăри колхозсен машинăсем çителĕклĕ. Анчах вĕсемпе тухăçлă усă курмаççĕ. Ял хуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин руководителĕсем выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе оперативлă ертсе пымаççĕ, МТС руководителĕсем умне çирĕп требованисем лартмаççĕ. Нумай МТС-сем выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе халĕ нимĕн те тумаççĕ пулин те, Ял хуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин руководителĕсем çав МТС-сен ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Министерство айăпне пулах ĕнтĕ ял хуçалăх специалисчĕсем выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе хăйсен организаторла пултарулăхне палăртмаççĕ.

Республикăри чылай колхозсем выльăх апачĕ тума ыраш акса хăвараççĕ. Анчах, пĕтĕм республикипе илсен, ку ĕç çителĕклĕ пулса пырать теме çук-ха. Малта пыракан колхозсем çулла выльăхсене ыраш çулса çитерни усăллă пулнине курса ĕненчĕç. Выльăх апачĕ валли ыраш акма панă плана кăçал кашни колхозрах тултармалла. Ку вăл апат хатĕрлемелли—хуçалăхри пысăк резервсенчен пĕри пулать.

Тырпула пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсем çине тимлĕ пăхнă вăхăтра парти райкомĕсен тата райсовет исполкомĕсен выльăх апачĕ хатĕрлес ыйтăва та манăçа хăвармалла мар. Утă-улăма пухса кĕртес, силос хывас тата ытти майсемпе выльăх апачĕ ытларах хатĕрлес ĕç ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе парти райкомĕсен те, райсовет исполкомĕсен те хальхи тапхăрта питĕ тăрăшса ĕçлемелле. Вĕсен выльăх апачĕ хатĕрлесси пĕтĕм районта тата уйрăм колхозсенче мĕнле пулса пынине витĕр курса тăмалла, çитменлĕхсене кура васкавлă мерăсем йышăнмалла, кашни колхоза уйрăммăн пулăшмалла.

Сентябрь уйăхĕ—выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçĕн пĕтĕм ăнăçлăхне татса паракан уйăх. Çак тапхăрта татăклă улшăнусем тумасан, кайран питĕ хĕн пулать. Тăван çĕршыв, мĕнпур совет халăхĕн интересĕсем çапла тума хушаççĕ: выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç юлса пынине халех пĕтерес пулать, сентябрь уйăхĕнче çулталăк валли мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ выльăх апачĕ хатĕрлесе хумалла, ăна шута илсе типтерлĕ сыхласа усрама, перекетлĕн расходлама тивĕçлĕ çынсен аллине актпа памалла.

Ĕç хăвăртрах тата типтерлĕрех пултăр тесен, МТС-семпе колхозсен мĕнпур техникипе тухăçлă ĕçлемелле, выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадăсене çирĕплетмелле, вĕсенче ĕçе тĕрĕс организацилемелле. Ку бригадăсене утă-улăм хатĕрлес, силос хывас ĕçрен уйăрма кирлĕ мар.

Выльăх апачĕ ытларах хатĕрлеме ытти майсемпе те усă курас пулать. Çĕрулми, кăшман тата ытти çавнашкал культурăсене вăхăтра тата тăккаламасăр пухса кĕртмелле. Улăх-çарансенчи тата сырма-çатрасенчи курăка иккĕмĕш хут çулса илес пулать. Чылай колхозсенче итемсем çинче пухăнакан арпа-улăма тата тырпул каяшĕсене типтерлĕ тыткаламаççĕ, купан-купан туса, вĕсене кĕркуннеччĕнех итем тавра выртараççĕ, час-часах тустарса пĕтереççĕ е пăсăлтараççĕ. Кун пек йĕркесĕрлĕх пулмалла мар.

Колхозсенчи тата МТС-сенчи парти организацийĕсем, çавăн пекех парти райкомĕсем умĕнче çавăн пек задача тăрать: выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе колхозниксене тата механизаторсене социализмла ăмăртăва явăçтарас пулать. Выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесен кăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕç юлса пынине пĕтерме май килнине, çавна май эпир халăх валли питĕ нумай апат-çимĕç, промышленность валли питĕ нумай чĕртавар парса тăма пултарнине колхозниксен анлă массине ăнлантарса памалла.

Выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесси государствăшăн, кашни колхозпа колхозникшăн питĕ кирлĕ ĕç. Ку ĕçе ăнăçлă пурнăçлани колхозсен экономикăлла вăй-хăватне тата колхозниксем ĕçкунĕсем тăрăх илекен тупăша ӳстерме кирлĕ.

*

Ишлей районĕнчи колхозсем государствăна тырă памалли плана тултарнă

ШУПАШКАР, августăн 29-мĕшĕ. (Телеграфпа). ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсемпе тата ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ каланă сăмахпа хавхаланса, Ишлей районĕнчи колхозсем августăн 29-мĕшĕнче государствăна тырă памалли плана тултарчĕç. МТС ĕçлесе панăшăн натуроплата тӳлемелли счетсем тăрăх государствăна тырă парас ĕç малалла пырать. Çавăнпа пĕрлех районти колхозсем августăн 26-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсем акма государство панă плана пурнăçларĕç, выльăх апачĕ валли ыраш акса пĕтереççĕ.

КПСС райкомĕн секретарĕ В. ДМИТРИЕВ.
Райисполком председателĕ П. НИКОЛАЕВ.
Ял хуçалăхĕпе-хатĕрлев управленийĕн начальникĕ С. СОКОЛОВ.
МТС директорĕ А. ЧУПРАКОВ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

*

Халăха кирлĕ таварсем

ЛЕНИНГРАД. Кăçал «Ленгорпромсовет» промысла кооперацийĕн артелĕсем çĕнĕрен 150 йышши тĕрлĕ япаласем туса кăларма тытăннă. Вăл шутра—эмалированнăй савăт-сапа, сăран тата замш перчаткăсем, чемодансем, электричество аппаратури, халăха кирлĕ тĕрлĕ таварсем.

Продукци пахалăхĕ лайăхланнă. Туса кăлармалли таварсен ассортиментне пĕтĕмпех çĕнĕрен пăхса тухнă. Хулари 200 яхăн мастерской, ателье, артель пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан предприяти ятне илнĕ.

Хулари промысла кооперацийĕ август уйăхĕнче халăха кирлĕ таварсем, июль уйăхĕнчипе танлаштарсан, 5 миллион тенкĕлĕх ытларах туса кăларать.

ИЖЕВСК. Удмурт АССР-ĕнчи промысла артелĕсем сăран атăсемпе çăматăсем, пирвăр, çыхнă кĕпесем, сĕтел-пукан, савăт-сапа туса кăлараççĕ. Халĕ, иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, халăха кирлĕ таварсем 16 миллион тенкĕлĕх ытларах туса кăларнă. «Удпромсовет» предприятийĕсенче çĕнĕрен 30 йышши тĕрлĕ тумтир, атă-пушмак туса кăларма тытăннă.

Артельсем туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакĕ 3 процент чакнă. (ТАСС).

900 мастерской уçнă

КИШИНЕВ, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Унген районĕн центрĕнче йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комбинат туса лартнă. Пысăк çуртра тумтир, атă-пушмак çĕлекен, кил хушшинче кирлĕ япаласене юсакан мастерскойсем вырнаçнă. Хальхи вăхăтра çавăн пек комбинатсем Ниспоренра, Каларашра, Липканра, Рыбницăра тата ытти районсен центрĕсенче тăваççĕ.

Молдаван республикинчи хуласемпе ялсенче атă-пушмак, тумтир çĕлекен, сехет юсакан тата ытти тĕрлĕ мастерскойсем 900 ытла уçнă. Кăçал кунта çĕнĕрен 100 мастерской уçаççĕ.

„Беларусь“ трактор моторĕ

МИНСК, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Минскри трактор заводĕн коллективĕ «Беларусь» ятлă урапаллă тракторсем туса кăларма хатĕрленсе çитет.

—Заводра çак трактор валли пĕрремĕш дизель-мотор туса хатĕрленĕ. Мотор хăвачĕ 37 лаша вăйĕ чухлĕ.

Кишинев хули. Ленин ячĕпе тăракан проспект.
П. ЛИСЕНКИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Шахтерсен кунĕ ячĕпе

СТАЛИНО. «Чистяковантрацит» трест—Донбасри малта пыракан трестсенчен пĕри. Çак трестри горняксем планран ирттерсе çĕр кăмрăкĕ кăлармалли обязательствăна срокчен пурнăçланă. Вĕсем августăн 27-мĕшĕнче 8 уйăхри плана тултарса çитернĕ.

Кăçал горняксен ĕç тухăçлăхĕ 7,2 процент ӳснĕ. Кашни талăкра, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 8,6 процент ытларах çĕр кăмрăкĕ кăлараççĕ. Юлашки икĕ уйăх хушшинче топливăн хăйне ларакан хакне чакарнипе государство укçине çур миллион тенкĕ перекетлесе хăварнă.

Çакăн пек çитĕнӳсене шахтерсем цикл графикĕ тăрăх ĕçленипе, машинăсемпе тата механизмсемпе тухăçлă ĕçленипе тума пултарнă. Халĕ трестри шахтăсенчи лавăсем çурри ытла цикл графикĕ тăрăх ĕçлеççĕ. Чистяково хулинчи шахтерсем çĕнĕрен пысăкрах обязательствăсем илнĕ. Вĕсем çулталăк иртнĕ тĕле планран ирттерсе тата вуншар пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларса пама пулнă. (ТАСС).

• • •

Донбасри «Сталинуголь» комбинатри ватă рабочисене 553 çынна Шахтерсен кунĕ ячĕпе «Почетный шахтер» ятлă значокпа наградăланă. Августăн 28-мĕшĕнче вĕсене значоксем панă.

Халĕ ĕнтĕ Сталино облаçĕнчи 6 пин çынна ытла «Почетный шахтер» значокпа наградăланă.

УЗЛОВОЙ. «Молотовуголь» трестри горняксем Шахтерсен кунне ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. Вĕсем планран ирттерсе 45 эшелон çĕр кăмрăкĕ кăларса ăсатнă. Çапла вĕсем кăçалхи çул валли илнĕ обязательствăра кăтартнинчен 20 эшелон ытларах çĕр кăмрăкĕ кăларнă.

СЕВЕРО-ЗАДОНСК. «Москвоуголь» комбинатри шахтерсем çĕр кăмрăкĕн пахалăхне лайăхлатса пыраççĕ. Кăмрăк пахалăхĕ лайăх пулнăшăн 22 миллион тенкĕ премин укçи илнĕ. «Красноармейскуголь» трестри 32, 33, 34 тата 35 номерлĕ шахтăсенчи горняксем уйрăмах пысăк çитĕнӳ тунă. Çак предприятисем стандарт тăрăх кăтартнинчен лайăхрах çĕр кăмрăкĕ кăларса панăшăн 3—3,5 миллионшар тенкĕ премин укçи илнĕ. (ТАСС).

Суту-илӳ вăйланса пырать

ТБИЛИСИ. Çак кунсенче Тбилиси хулинчи тĕп урамсенчен пĕринче—Плеханов ячĕпе тăракан проспектра — çĕнĕ тумтирпе кĕпе-йĕм сутмалли магазин уçăлнă. Ку вăл—кăçал хулара çĕнĕрен уçнă 27-мĕш магазин. Виççĕмĕш кварталта тата вунă çĕнĕ магазинта апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем сутма пуçлаççĕ.

Кăçалхи çул Тбилиси хулинче 70 ытла магазинсем, павильонсем, киоскăсемпе ларексем çĕнĕрен уçнă. (ТАСС).

*

Неро кӳлли айлăмĕнче

РОСТОВ (Ярославль облаçĕ), августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Неро кӳлли 2 пин гектар ытла йышăнса выртать. Халĕ çак кӳлĕ çывăхĕнчи айлăма типĕтес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем пуçланса кайнă. Экскаваторсем тарăн каналсем чаваççĕ. Çав каналсем тăрăх шурлăхри шыв Которосль юханшывне юхса тухмалла пулать. Магистральнăй каналсем хушшинче шурлăха типĕтекен пĕчĕк каналсем тăваççĕ.

Çак вырăна типĕтсе çитерсен, Ростов районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, «Стахановец», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Коммунар» тата ытти колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илме çĕр нумай туянаççĕ. Кӳлĕ тăрăхĕнчи çĕрсемпе усă курни вырăнти колхозсене çĕнĕрен вуншар миллион тенкĕлĕх тупăш илме май парать.

Вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн

ВЛАДИВОСТОК. Приморье крайĕнче шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитнĕ. Крайри хуласемпе ялсенче шкулсем валли çĕнĕ çуртсем туса пĕтернĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче Владивостокра, Ворошиловра, Сучанра, Калинински районĕнчи Вагутон поселокĕнче çĕнĕ вăтам шкулсем уçăлаççĕ. Находка ятлă çĕнĕ хулара тăвакансем икĕ вăтам шкул тата пĕр пуçламăш шкул валли çуртсем лартаççĕ.

Приморье крайĕнчи шкулсем вĕренме чухне кирлĕ хатĕрсем пĕлтĕрхинчен икĕ хут нумайрах туяннă. Вăл шутра слесарь, столяр ĕçне тумалли инструментсем тата ял хуçалăх инвентарĕ чылай.

Нумай шкулсенче кино кăтартмалли аппаратсем вырнаçтарса лартаççĕ. Пожарски, Чугуевски, Тетюхински тата Анучински районĕсенчи тайгари инçетр ялсенчи шкулсене валли 25 электростанци туянса панă. Çав электростанцисем киноустановкăсем валли электроэнерги парса тăмалла.

Крайри шкулсенче ĕçлеме çамрăк учительсем пин çын ытла килнĕ. Вĕсем Приморье крайĕнчи, Мускаври, Ленинградри, Воронежри, Великие Лукинчи, Тамбовр тата ытти хуласенчи педагогика асл шкулĕсенчен вĕренсе тухнă. (ТАСС).

Çĕнĕ завод

ВОЛОГДА, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС) Паян кунта çĕнĕ çу завочĕ продукци тус кăларма пуçланă. Заводра пĕтĕмпех çĕн техника вырнаçтарса лартнă. Çак пред приятни ĕçлеме пуçланă хыççăн, хулар услам çу туса кăларасси икĕ хут ытла кефирь тата простокваша туса кăларас си вунă хут ӳснĕ.

Кучухнехи хăватлă юхăм

Ыран стахановла юхăм — пирĕн саманари хăватлă юхăм пуçланнăранпа вунсакăр çул çитет.

Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви социализм строительствин пур тапхăрĕсенче те ĕç тухăçлăхне ӳстерессине пысăка хурса хакланă. «Ĕç тухăçлăхĕ вăл,—тенĕ В. И. Ленин,—юлашки шутран, çĕнĕ обществăлла строй çĕнтерес ĕçре чи кирли, чи тĕп вырăнта тăраканни... Коммунизм вăл—ирĕклĕ, ăнланулла, пĕрлешнĕ, лайăх техникăпа ĕçлекен рабочисен капитализм чухнехинчен çӳлте тăракан ĕç тухăçлăхĕ».

Совет влаçĕн малтанхи кунĕсенчех В. И. Ленин парти умне, ĕççыннисем умне çакăн пек задача лартнă: ĕçе çĕнĕлле, социализмла организацилемелле, ĕç тухăçлăхне ӳстермелле, ĕçĕн çĕнĕ, социализмла дисциплинине тумалла, социализмла ăмăрту организацилемелле.

Социализмла система уйрăм çынна пусмăртан хăтарчĕ, уйрăм çынсен творчествине чечеклесе ӳсме май пачĕ, халăх массисем хушшинчи талантсемпе пултарулă çынсене пур енĕпе те аталанса пыма условисем туса пачĕ. Пĕрремĕш пилĕкçуллăхсенче пирĕн халăх хуçалăхĕ чи малта тăракан техникăпа хĕçпăшалланнă. Ленин—Сталин партийĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнипе çĕршывра техникăна алла илнĕ кадрсем ӳссе çитĕнчĕç. Халăх хуçалăхĕ ăнăçлă аталанса пынă май ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсем хăвăрт ӳссе пычĕç. Çак никĕс çинче, социализмла ăмăртăвăн çĕнĕ, çӳлти пусăмĕ—стахановла юхăм пуçланса кайрĕ. Стахановецсем — техника тĕлĕшĕнчен хĕçпăшалланнăскерсем, техникăран мĕн илме май пуррине пĕтĕмпех илме пĕлекен, ĕçре [illegible] тĕслĕхĕсене кăтартакан çынсем. Вĕсем халăх хуçалăхне малалла аталантарас, умра тăракан задачăсене пурнăçлас ĕçре пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çавăнпа Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви стахановла юхăма пысăка хурса хаклаççĕ.

Совет çыннисем хăйсен опычĕпен кашни кунах çакна курса ĕненеççĕ: производствăна лайăх организацилени, çĕнĕ техникăпа усă курни, ĕçе лайăхлатмалли тĕрлĕ майсемпе изобретенисем ялан ĕçе çăмăллатаççĕ, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатаççĕ. Социализм строительствин пур участокĕсенче те ĕççыннисен творчествăлла пуçарăвĕн тĕслĕхĕсем нумай, вĕсем производствăна пермаях ӳстерсе, лайăхлатса пыма пулăшаççĕ. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезĕнче Г. М. Маленков юлташ çакна палăртрĕ: пирĕн халăх хăйĕн творчествăлла пуçарулăхĕпе, тавçăрулăхĕпе, изобретенисем тума пултарнипе тахçанах чапа тухнă.

Ĕççыннисем, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, ĕç тухăçлăхне татăшах ӳстерсе пыраççĕ, тĕнчере халиччен пулман тĕслĕхсем кăтартаççĕ. ССР Союзĕнчи паллă стахановецсен паха опычĕпе халăх демократи çĕршывĕсенче те анлăн усă кураççĕ. Совет халăхĕн творчествăлла активлăхĕ вăйланса пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. 1937 çулта промышленноçра ĕç тухăçлăхĕ, 1913 çулхипе танлаштарсан, 4,5 хут ӳснĕ. 1940—1951 çулсен хушшинчи тапхăрта промышленноçра ĕç тухăçлăхĕ 50 процент ӳснĕ, çав хушăра промышленность продукцийĕн ӳсĕмĕн 70 процентне ĕç тухăçлăхне хăпартнипе тунă.

Совет халăхĕ çĕршыва индустриализацилемелли политикăна пурнăçласа пырса тата ĕç тухăçлăхне пермаях хăпартса партин XIV-мĕш съезчĕ хыççăн, урăхла каласан, 28 çул хушшинче промышленноçть продукци туса кăларассине 29 хут ӳстерчĕ. Кăçал пирĕн промышленность, 1940 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут çурă нумайрах продукци туса кăларать.

Стахановла юхăмăн хăватлă вăйне хăвăр республикăра тĕслĕхсенчен те уççăн курма пулать. Кашни предприятире, стройкăра, транспортра, МТС-ра, колхозра—халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те—стахановецсен йышĕ пысăк. Паллă новаторсене—Пронькин, Салкин, Назаров, Сысуйкин, Вельдяев, Мищенко, Королев, Базяев, Чапурина, Филиппова, Лукина юлташсене тата ыттисене те республикăри ĕççыннисем лайăх пĕлеççĕ, пиншер рабочисем, колхозниксем, механизаторсем вĕсенчен стахановла ĕçлеме вĕренеççĕ. Стахановла юхăм анлă сарăлса кайнине пула республика умра тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласа пырать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ совет халăхĕ умне социализмран майĕпен коммунизма куçса пырса, коммунизмла общество тăвас, обществăн пурлăхпа культура шайне пермаях хăпартса пырас, Тăван çĕршывăн активлă оборонине пур майсемпе те тĕреклетсе пырас задача кăларса тăратрĕ. Çак задачăна ăнăçлă пурнăçлас тесен, ĕççыннисен творчествăлла пуçарулăхне пур майсемпе те малалла аталантармалла, социализмла ăмăртăва анлăн сарса пымалла, предприятисенче, колхозсенче, МТС-сенче ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме пулăшакан лайăх, кăтартуллă тĕслĕхсем ытларах пулччăр тесе тăрăшмалла, çак кăтартуллă тĕслĕхсене массăсем хушшинче çине тăрса сарса пымалла.

Республикăра социализмла ăмăртăва, стахановла юхăма çителĕксĕр ертсе пыракан партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсем те сахал мар-ха. Чылай предприятисенче малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сармаççĕ, самокритикăна, уйрăмах аялтан килекен критикăна вăйлатмаççĕ, коллективăн пуçарулăхĕпе пултарулăхне вăйлатма тăрăшмаççĕ.

Вăрман промышленноçĕ, чылай стройкăсем, хăшпĕр промкомбинатсемпе промартельсем юлса пыни пуринчен ытла социализмла ăмăртăва ăнăçлă ертсе пыманнипе, рабочисене тухăçлă ĕçлеме, малта пыракансен опычĕпе усă курма пах майсем туса паманнинчен килет.

Парти çапла вĕрентет: çĕнни кивви малта пыраканни кая юлнипе кĕрешн чухне çĕнĕ обществăлла строя тăвака вăйсене курни кăна мар, çав вăхăтра вăл вăйсене ялан ӳстерсе пыни, вĕсен пур майсемпе те аталантарма тăрăшн малалла ăнăçлăн кайса пырас тесе, вĕсене организацилесе, лайăхлатса пыни кирлĕ.

Парти, профсоюз тата хуçалăх органи зацийĕсен ĕççыннисене техникăна тат лайăхрах вĕренме, вĕсен культурăлла техникăлла шайне хăпартма пулăшас пу лать. «ССР Союзĕнчи социализмăн эконо микăлла проблемисем» ятлă произведени ре И. В. Сталин çапла калать: «Хăйс культурăлла-техникăлла шайне рабочисе уйрăм ушкăнĕсем çеç мар, рабочисен ыт ларахăшĕ инженерсемпе техниксен шай таран ӳстернĕ пулсан, мĕн пулнă пу лĕччĕ-ха? Пирĕн промышленность атала нăвĕ ытти çĕршывсен промышленно ситме пултарайман виçене çитнĕ пулĕччĕ Çапла вара, ăс-тăн ĕçĕпе вăй-хал ĕçле вĕ хушшинчи тĕп уйрăмлăха рабочисе культурăлла-техникăлла шайне инже нерсемпе техниксен шайĕ таран çĕкленте нĕ пĕтерни пирĕншĕн питех те пысă пĕлтерĕшлĕ пулнине [illegible] çук».

Халĕ, партипе правительство совет ха лăхĕн пурнăçпа йăла условийĕсене лайăх латмалли пысăк программăна хăвăрт пур нăçа кĕртсе пынă вăхăтра, социализмл ăмăртăва тата анлăрах сармалла, рабочи сене, колхозниксене, интеллигенцие про мышленность таварĕсемпе ял хуçалăх пр дукцийĕсем ытларах туса кăларма, продук ци пахалăхне лайăхлатма, таварсен ха кĕсене йӳнетме мобилизацилемелле.

Социализмла ăмăртăва тата анлăра сарни, стахановецсен йышне нумайлатни совет халăхне пилĕкçуллăх планне срокчен ăнăçлă тултарма пулăшать.

Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен йышăннă

ЗАКОН

Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1 статья. РСФСР Министрĕсен Совечĕ çирĕплетме тăратнă бюджета — Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи Государство бюджетне, Бюджет комиссийĕн докладĕ тăрăх кĕртнĕ улшăнусене шута илсе, çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес: тупăшсем енĕпе 57.640.589 пин тенкĕ, расходсем енĕпе 57.551.161 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 89.428 пин тенкĕ ытларах пулмалла тата, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕ 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1.726.565 пин тенкĕ пулмалла.

2 статья. РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ тăрăх халăх хуçалăхне 10.926.037 пин тенкĕ, кунсăр пуçне, предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен хăйсен укçинчен 8.198.180 пин тенкĕ, çапла вара пĕтĕмпе 19.124.217 пин тенкĕ уйăрса памалла. Çакă вăл, 1952 çулхипе танлаштарсан, 2.075.978 пин тенкĕ ытларах пулать.

3 статья. РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджетĕнчен социально-культурăллă ĕçсем валли пĕтĕмпе 40.990.301 пин тенкĕ уйăрса памалла тăвас, çакă вăл, 1952 çулхипе танлаштарсан, 2.495.424 пин тенкĕ ытларах пулать.

Социально-культурăллă ĕçсен уйрăм енĕсем тăрăх çакăн чухлĕ расходламалла тăвас:

а) çутĕçпе культура енĕпе — пуçламăш, çичĕ çул вĕренмелли, вăтам шкулсем, техникумсем тата ытти вăтам специальнăй шкулсем валли; аслă шкулсем тата наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем валли; фабрикăпа завод шкулĕсем, курссем, рабочисен, колхозниксен тата инженерсемпе техниксен квалификацийне ÿстермелли ытти ĕçсем валли; библиотекăсем, культура дворецĕсемпе çурчĕсем, клубсем, театрсем, пичет тата çутĕçпе культура енĕпе ытти ĕçсем валли — пĕтĕмпе 22.307.765 пин тенкĕ, çакă вăл 1952 çулхинчен 830.618 пин тенкĕ ытларах пулать;

б) сывлăха сыхлас ĕç енĕпе — больницăсем, диспансерсем, ача çуратмалли çуртсем, ача яслисем, санаторисем тата халăха медицина пулăшăвĕ парас енĕпе ĕçлекен ытти учрежденисем валли; спортпа физкультура ĕçĕсем валли — пĕтĕмпе 13.179.204 пин тенкĕ, çакă вăл, 1952 çулхипе танлаштарсан 1.192.880 пин тенкĕ ытларах пулать.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçе малалла лайăхлатас, больницăсене, поликлиникăсене тата ытти медицина учрежденийĕсене медицина оборудованийĕ, кĕпе-йĕмпе вырăн çитти таврашĕ тата хуçалăх инвентарĕ парса тăрас ĕçе лайăхлатас тĕллевпе РСФСР Министрĕсен Совечĕ 1953 çулта сывлăха сыхлас ĕç валли çĕнĕрен хушса 851.258 пин тенкĕ уйăрса памалла тунине çирĕплетес, вăл шутран: чирлĕ çынсене апатлантарас ĕçе лайăхлатма 303.123 пин тенкĕ, медикаментсем туянма кирлĕ расходсене ÿстерме 128.335 пин тенкĕ, чирлĕ çынсем валли çĕнĕрен кĕпе-йĕм туянма 183.100 пин тенкĕ, медицинăпа хуçалăх инвентарĕ туянма 159.500 пин тенкĕ, сывлăх учрежденийĕсене тĕпрен юсама 77.200 пин тенкĕ;

в) социальнăй обеспеченипе социальнăй страховани енĕпе — ĕç инвалидĕсемпе вĕсен çемйисене пенсипе пособи укçи тÿлеме; инвалидсен çурчĕсене тытса тăма тата ытти пенсисем валли — пĕтĕмпе 5.503.332 пин тенкĕ, çакă вăл 1952 çулхинчен 471.926 пин тенкĕ ытларах пулать.

4 статья. Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи республика бюджетне тупăшсем енĕпе 39.775.140 пин тенкĕ тата расходсем енĕпе 39.685.712 пин тенкĕ çирĕплетес, тупăшсем расходсенчен 89.428 пин тенкĕ ытларах пулмалла, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 359.914 пин тенкĕ пулмалла.

5 статья. РСФСР-ти крайсен, облаçсен, республикăна пăхăнса тăракан хуласен тата автономиллĕ советлă социализмлă республикăсен 1953 çулхи бюджечĕсене çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес:

(пиншер тенкĕпе)

Крайсен, облаçсен, республикăна пăхăнса тăракан хуласен тата автономиллĕ республикăсен ячĕсем	Тупăшсем тата расходсем	Кунсăр пуçне бюджетри укçа-тенкĕн 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ
1. Алтай крайĕ	769.334	32.662
2. Краснодар крайĕ	1.061.880	42.696
3. Сочи хули	56.747	700
4. Красноярск хули	105.703	1.250
5. Красноярск крайĕ	712.784	31.700
6. Приморски край	433.093	12.300
7. Ставрополь крайĕ	589.569	22.600
8. Хабаровск крайĕ	837.007	26.200
9. Амур облаçĕ	284.983	9.600
10. Архангельск облаçĕ	497.053	18.100
11. Астрахань облаçĕ	283.846	8.376
12. Брянск облаçĕ	473.644	19.789
13. Великие Луки облаçĕ	284.890	10.616
14. Владимир облаçĕ	475.444	14.772
15. Вологда облаçĕ	526.399	20.800
16. Воронеж облаçĕ	899.743	36.200
17. Горький хули	334.219	4.100
18. Горький облаçĕ	768.260	29.600
19. Грозный облаçĕ	249.030	7.200
20. Иваново облаçĕ	550.753	15.176
21. Иркутск облаçĕ	546.729	18.600
22. Калининград облаçĕ	278.507	6.999
23. Калинин облаçĕ	622.478	21.817
24. Калуга облаçĕ	375.946	13.700
25. Кемерово облаçĕ	722.176	19.017
26. Киров облаçĕ	711.145	28.634
27. Кострома облаçĕ	367.235	13.800
28. Крым облаçĕ	410.327	11.200
29. Севастополь хули	114.512	1.500
30. Куйбышев хули	263.245	3.600
31. Куйбышев облаçĕ	457.409	17.300
32. Курган облаçĕ	340.391	13.600
33. Курск облаçĕ	725.061	34.560
34. Ленинград хули	1.977.837	28.000
35. Ленинград облаçĕ	521.848	15.500
36. Молотов хули	201.327	2.500
37. Молотов облаçĕ	754.853	24.600
38. Мускав хули	3.716.066	44.600
39. Мускав облаçĕ	1.865.257	48.500
40. Мурманск облаçĕ	259.032	5.800
41. Новгород облаçĕ	328.552	11.042
42. Новосибирск хули	261.729	3.500
43. Новосибирск облаçĕ	445.957	19.000
44. Омск хули	158.529	2.000
45. Омск облаçĕ	389.702	18.253
46. Орел облаçĕ	458.391	19.452
47. Пенза облаçĕ	484.161	19.002
48. Псков облаçĕ	267.511	9.718
49. Дон çинчи Ростов хули	218.653	2.700
50. Ростов облаçĕ	783.689	27.183
51. Рязань облаçĕ	592.970	23.665
52. Саратов хули	208.190	2.700
53. Саратов облаçĕ	587.912	22.856
54. Сахалин облаçĕ	464.199	13.900
55. Свердловск хули	304.994	3.900
56. Свердловск облаçĕ	1.022.991	27.000
57. Смоленск облаçĕ	486.621	19.100
58. Сталинград хули	213.946	2.550
59. Сталинград облаçĕ	494.995	19.200
60. Тамбов облаçĕ	509.215	21.644
61. Томск облаçĕ	300.126	12.200
62. Тува автономиллĕ облаçĕ	[illegible]	3.500
63. Тула облаçĕ	[illegible]	17.101
64. Тюмень облаçĕ	[illegible]	20.988
65. Ульяновск облаçĕ	[illegible]	14.712
66. Челябинск хули	[illegible]	2.500
67. Челябинск облаçĕ	[illegible]	16.900
68. Чита облаçĕ	372.986	13.500
69. Чкалов облаçĕ	593.240	21.800
70. Ярославль облаçĕ	535.826	16.957
71. Тутар Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	996.992	37.700
Вăл шутра Хусан хули	192.183	2.000
72. Пушкăрт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	990.825	42.000
Вăл шутра Уфа хули	89.412	1.600
73. Дагестан Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	423.824	17.000
74. Бурят-Монгол Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	268.480	8.600
75. Кабарди Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	168.559	6.500
76. Коми Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	251.676	9.500
77. Мари Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	249.731	9.355
78. Мордва Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	350.416	15.691
79. Çурçĕр-Осетин Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	216.163	6.800
80. Удмурт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	456.767	16.000
81. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	349.034	14.218
82. Якут Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	417.745	16.500

6 статья. 1953 çулта РСФСР-ти крайсен, облаçсен, республикăна пăхăнса тăракан хуласен тата автономиллĕ советлă социализмлă республикăсен бюджечĕсене халăхран тупăш тăрăх илекен налогран, ялхуçалăх налогĕнчен, ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданĕсенчен илекен налогран, государство заемĕсене подпискăпа сарнинчен пухакан укçаран, машина-трактор станцийĕсен тупăшĕсенчен тата оборотран илекен налог укçинчен çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас:

Крайсен, облаçсен республикăна пăхăнса тăракан хуласен тата автономиллĕ республикăсен ячĕсем	Шутласа илмелли процент					
	Халăхран тупăш тăрăх илекен налогран	Ялхуçалăх налогĕнчен	ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданĕсенчен илекен налогран	Государство заемĕсене подпискăпа сарнинчен пухакан укçаран	Машина-трактор станцийĕсен тупăшĕсенчен	Оборотран илекен налогран
1. Алтай крайĕ	50	36	61	50	15	14,0
2. Краснодар крайĕ	30	29	37	40	16	7,5
3. Сочи хули	10	—	15	20	—	7,0
4. Красноярск хули	5	—	10	10	—	12,0
5. Красноярск крайĕ	35	30	39	50	25	7,2
6. Приморски край	15	30	28	28	24	2,0
7. Ставрополь крайĕ	30	50	43	50	20	7,2
8. Хабаровск крайĕ	15	100	49	50	60	4,6
9. Амур облаçĕ	50	40	39	40	21	9,3
10. Архангельск облаçĕ	25	50	41	50	50	8,2
11. Астрахань облаçĕ	35	60	39	50	30	12,5
12. Брянск облаçĕ	60	35	59	50	26	16,5
13. Великие Луки облаçĕ	50	50	80	60	30	30,4
14. Владимир облаçĕ	30	30	40	40	25	6,4
15. Вологда облаçĕ	50	50	61	50	29	14,8
16. Воронеж облаçĕ	50	30	28	40	16	10,8
17. Горький хули	5	100	6	5	—	1,2
18. Горький облаçĕ	25	40	38	40	23	10,6
19. Грозный облаçĕ	30	50	38	50	21	9,7
20. Иваново облаçĕ	20	30	43	40	28	5,2
21. Иркутск облаçĕ	20	32	38	30	32	5,1
22. Калининград облаçĕ	30	70	59	50	100	8,2
23. Калинин облаçĕ	35	35	47	40	23	6,2
24. Калуга облаçĕ	50	40	60	50	34	23,8
25. Кемерово облаçĕ	15	30	21	30	26	5,7
26. Киров облаçĕ	50	40	48	50	25	11,7
27. Кострома облаçĕ	40	40	59	50	25	15,0
28. Крым облаçĕ	25	60	37	50	28	5,5
29. Севастополь хули	30	100	50	50	—	26,0
30. Куйбышев хули	5	—	7	10	—	1,4
31. Куйбышев облаçĕ	30	40	58	50	20	18,6
32. Курган облаçĕ	50	50	59	50	25	21,5
33. Курск облаçĕ	50	35	58	50	17	20,2
34. Ленинград хули	5	100	6	5	—	1,4
35. Ленинград облаçĕ	30	50	60	50	44	15,0
36. Молотов хули	5	—	6	10	—	2,2
37. Молотов облаçĕ	25	30	40	50	25	11,3
38. Мускав хули	5	100	6	5	—	1,5
39. Мускав облаçĕ	10	30	27	25	38	5,3
40. Мурманск облаçĕ	25	100	41	40	100	5,5
41. Новгород облаçĕ	50	50	59	50	45	18,8
42. Новосибирск хули	5	—	7	5	—	2,2
43. Новосибирск облаçĕ	60	50	60	60	30	27,4
44. Омск хули	5	—	5	5	—	2,9
45. Омск облаçĕ	100	70	100	60	25	64,0
46. Орел облаçĕ	60	50	70	60	27	24,6
47. Пенза облаçĕ	50	50	65	50	20	10,6
48. Псков облаçĕ	60	50	100	60	30	35,4
49. Дон çинчи Ростов хули	4	100	4	4	—	0,1
50. Ростов облаçĕ	20	40	40	50	15	9,9
51. Рязань облаçĕ	60	40	60	50	25	19,8
52. Саратов хули	5	—	4	6	—	2,0
53. Саратов облаçĕ	50	40	61	60	15	25,9
54. Сахалин облаçĕ	30	100	60	70	100	13,7
55. Свердловск хули	4	100	5	4	—	1,3
56. Свердловск облаçĕ	15	28	30	80	35	6,9
57. Смоленск облаçĕ	60	40	70	51	28	25,1
58. Сталинград хули	10	—	8	10	—	4,2
59. Сталинград облаçĕ	50	50	100	60	21	31,4
60. Тамбов облаçĕ	40	35	60	50	21	22,0
61. Томск облаçĕ	40	70	70	50	23	9,2
62. Тува автономиллĕ облаçĕ	100	100	—	100	100	91,0
63. Тула облаçĕ	20	30	39	40	34	8,2
64. Тюмень облаçĕ	40	50	61	50	29	26,8
65. Ульяновск облаçĕ	50	40	51	50	27	16,2
66. Челябинск хули	5	—	4	5	—	1,0
67. Челябинск облаçĕ	15	30	40	40	32	6,6
68. Чита облаçĕ	25	50	38	40	17	11,9
69. Чкалов облаçĕ	30	40	50	50	21	14,2
70. Ярославль облаçĕ	20	30	41	40	30	6,7
71. Тутар Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	35	30	49	50	24	10,5
Вăл шутра Хусан хули	5	—	11	5	—	2,2
72. Пушкăрт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	40	30	50	50	30	11,9
Вăл шутра Уфа хули	5	—	[illegible]	6	—	2,3
73. Дагестан Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	50	80	100	60	50	40,6
74. Бурят-Монгол Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	50	40	50	50	50	12,4
75. Кабарди Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	40	50	60	60	30	19,6
76. Коми Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	20	55	29	40	100	7,5
77. Мари Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	50	50	80	60	50	29,3
78. Мордва Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	50	50	80	60	32	32,5
79. Çурçĕр-Осетин Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	50	78	47	60	50	6,1
80. Удмурт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	45	40	58	50	30	12,0
81. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	40	50	61	50	40	28,7
82. Якут Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики	100	100	100	100	100	77,8

7 статья. 1953 çулта РСФСР-ти крайсен, облаçсен, республикăна пăхăнса тăракан хуласен тата автономиллĕ советлă социализмлă республикăсен бюджечĕсене пухăнакан укçа-тенкĕрен çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас:

а) вăрман тупăшĕнчен	40 процент
б) единоличниксен хуçалăхĕсенчен хушасемшĕн илекен государство налогĕнчен	75 процент
в) колхозсенчен тупăш тăрăх илекен налогран .	35 процент

8 статья. РСФСР-ăн Государство бюджетне пурнăçлани çинчен калакан отчетсене çакăн чухлĕ çирĕплетес: 1951 çулшăн — тупăшсем енĕпе 55.821.023 пин тенкĕ, расходсем енĕпе 54.830.357 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 990.666 пин тенкĕ ытларах тата, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1.624.090 пин тенкĕ; 1952 çулшăн — тупăшсем енĕпе 54.769.047 пин тенкĕ, расходсем енĕпе 54.259.759 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 509.288 пин тенкĕ ытларах тата, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1.641.491 пин тенкĕ.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Председателĕ М. ТАРАСОВ.
РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Секретарĕ И. ЗИМИН.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи августăн 27-мĕшĕ.

* * *

РСФСР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 130-мĕш статьине улшăнусем кĕртесси çинчен йышăннă

ЗАКОН

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ парти ятне улăштарнă май тата СССР Конституцийĕн 126-мĕш статьи тăрăх, Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

РСФСР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 130-мĕш статьине улшăнусем кĕртес, ку статьяна çакăн пек çырса хурас:

«130 статья. Ĕçсыннисен интересĕсемпе килĕштерсе тата халăх массисен организациллĕ пултарулăхĕпе политикăлла активлăхне ÿстерес шутпа РСФСР гражданĕсене обществăлла организацисене: профессиллĕ союзсене, кооперативлă пĕрлешÿсене, çамрăксен организацийĕсене, спортпа оборона организацийĕсене, культура, техника тата ăслăлăх обществисене пĕрлешме право парать, рабочи класĕн тата ĕçсыннисен урăх сийĕсен речĕсенчи чи активлă та чи ăнлануллă гражданĕсем вара — Совет Союзĕн Коммунистсен партине хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешеççĕ, вăл парти ĕçсыннисен коммунизм обществине тăвассишĕн пыракан кĕрешĕвĕнче малта пыракан отрячĕ пулса тăрать, ĕçсыннисен мĕнпур организацийĕсене — обществăллисене те, государствăллисене те — ертсе пыракан чăмăр пулса тăрать».

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Председателĕ М. ТАРАСОВ.
РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Секретарĕ И. ЗИМИН.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи августăн 27-мĕшĕ.

Учительсен августри канашлӑвӗсем

Вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатар

Августӑн 26—28-мӗшӗнче Шупашкарта пуҫламӑш, ҫичӗ ҫул вӗренмелли тата вӑтам шкулсенче ӗҫлекен учительсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Учительсем икӗ доклад итлерӗҫ. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗн итогӗсем тата ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗн задачисем ҫинчен хулари ҫутӗҫ пайӗн заведующийӗ Семенова юлташ, класс руководителӗн ӗҫӗсем ҫинчен 5-мӗш номерлӗ вӑтам шкул директорӗ Стешова юлташ докладсем туса пачӗҫ.

— Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗн историллӗ решенийӗсемпе хавхаланса, иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче хулари шкулсенчи нумай учительсем тарӑн та тӗплӗн пӗлӳсем парасшӑн, ҫав пӗлӳсемпе усӑ курма вӗрентесшӗн тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ,—терӗ докладне пуҫланӑ май Семенова юлташ. Вӑл вӗрентӳпе воспитани парас ӗҫре тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен каларӗ. Иртнӗ виҫӗ ҫул хушшинче кӑна хулара ҫӗнӗрен виҫӗ вӑтам шкул, икӗ ҫичӗ ҫул вӗренмелли тата каҫхи вӑтам шкул уҫнӑ. Вӑтам шкулсен саккӑрмӗш класне вӗренме кӗнӗ ачасен хисепӗ, 1950 ҫулпа танлаштарсан, 540 ачаран ытла иртнӗ. Ҫитес ҫулсенче Шупашкарта тепӗр пилӗк ҫӗнӗ шкул тума палӑртнӑ.

Политехникӑлла вӗрентӗве пурнӑҫлас тӗлӗшпе учительсем сахал мар ӗҫ туса ирттернӗ. Вӑтам тата ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсенче ҫӗнӗ кабинетсем, лабораторисем, тӗпчесе вӗренмелли участоксем организациленӗ. Тӑхӑр вӑтам шкулта узкопленчатӑй текен киноаппаратсем пур. Пур вӑтам шкулсенче те тепӗ пекех радио ӗҫлет.

Тӑлӑх ачасене 19.000 тенкӗлӗх ӑшӑ тумтирсемпе ытти тумсем илсе панӑ. Уйрӑмах ку ӗҫре хӗрачасем вӗренекен 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкул (шкул директорӗ Сычова юлташ) пысӑк ӗҫ туса ирттернӗ.

Отличниксен хисепӗ 573 ачана, «4» тата «5» паллӑсемпе вӗренекенсен хисепӗ 1.692 ачана ҫитнӗ. 1951—52-мӗш вӗренӳ ҫулӗнче пӗтӗм класӗпех ӗлкӗрсе пыракан класӗсем 32 пулнӑ пулсан, кӑҫал вӗсен шучӗ 50 ҫитрӗ. 66 учителӗн класӗсенчи вӗренекенсем пурте ӗлкӗрсе пыраҫҫӗ. Вӑтам шкултан вӗренсе тухнисенчен 10 ача ылтӑн, 30 ача кӗмӗл медаль илме тивӗҫлӗ пулнӑ.

ВЛКСМ XI-мӗш съезчӗ тата ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн VII-мӗш пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫланӑ май, комсомол тата пионер организацийӗсен ӗҫне лайӑхлатнӑ. Комсомолецсен пухӑвӗсем, пионерсен сборӗсем вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатма пулӑшнӑ. Кӑҫал ҫулла пионерсен лагерӗсенче 2.000 ача ытла каннӑ. Сывлӑхӗ начартарах ачасем санаторисенче пулнӑ. Вӗренекенсем Мускавра, Ленинградра, Сталинградра, Крымра, Кавказра тата ытти ҫӗрте пулчӗҫ.

Канашлура 33 ҫын тухса каласрӗ. Чи малтан 4-мӗш номерлӗ вӑтам шкулти учительница Петрова юлташ тухса каларӗ.

— Коммунистсен партийӗн политикине пурнӑҫлас ӗҫе учительсем питӗ нумай вӑй хураҫҫӗ,—терӗ вӑл.—Политехникӑлла вӗренӗве пурнӑҫлас ӗҫре физикӑпа вӗрентекен учительсен чи малти ретре пулмалла. Ку ӗҫ—ҫӗнӗ ӗҫ, учительсене пулӑшу кирлӗ. Анчах пирӗн хулари учительсем валли семинарсем вӑхӑтлӑ пулса пымаҫҫӗ.

РСФСР тава тивӗҫлӗ учительници Черпакова юлташ вӗренӳпе воспитани ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ учительсен, унӑн политикӑлла пӗлӗвӗ пысӑк пулнинчен килнине кӑтартса пачӗ.

Горбушина, Стребнев, Шигаева, Ухова, Сазонова, Петриченко юлташсем хулари шкулсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем ҫинчен каласрӗҫ. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗнче учительсен квалификацине, теорипе методика пӗлӗвӗсене, идейӑпа политикӑлла шайне ӳстересси чи пысӑк задачӑсенчен пӗри.

Арҫын ачасем вӗренекен 4-мӗш номерлӗ шкул директорӗ Ижойкин юлташ шкул ҫулне ҫитнӗ ачасене учета илес ӗҫре пӑтраштарусем пулни, канашлусенче йышӑннӑ решенисене вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртменни ҫинчен каларӗ.

22-мӗш номерлӗ шкулта рисованипе вӗрентекен учитель Жуков юлташ вӗренекенсене художествӑлла воспитани ҫителӗксӗр пани ҫинчен каларӗ.

— Учительсен канашлӑвӗсенче рисованине мӗнле вӗрентни ҫинчен питӗ сайра хутра кӑна илтме пулать. Шкул директорӗсен отчетӗнче те рисовани предмечӗ ҫинчен чи кайран кӑна ҫыраҫҫӗ е пачах асӑнмаҫҫӗ,—терӗ вӑл.

Пединститут директорӗн заместителӗ Каховский юлташ наукӑпа практика хушшинчи ҫыхӑну тачӑрах пулмалли ҫинчен каларӗ. Вӑл педагогика институчӗн планӗ тӑрӑх ҫав ыйтупа пулмалли ӗҫсемпе паллаштарчӗ.

Канашлура КПСС Чӑваш обкомӗн секретарӗсем Ахазовпа Ислюков юлташсем тата Чӑваш АССР Ҫутӗҫ министрӗ Токарев юлташ пулчӗҫ.

Августӑн 28-мӗшӗнче секци ӗҫӗсем пулса иртрӗҫ. Учительсем аслӑ шкулсенче ӗҫлекен работниксен доклачӗсемпе лекцийӗсене итлерӗҫ, хӑйсем тухса каласрӗҫ. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗнче тата та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвас тӗлӗшпе решени йышӑнчӗҫ.

Хулари учительсем КПСС Чӑваш обкомӗн секретарӗ, СССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Т. А. Ахазов юлташ тунӑ доклада пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ. Вӑл СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн итогӗсем ҫинчен каласа пачӗ.

В. ПЛЕШКОВ.

Политехникӑлла вӗренӳ ӗҫне тивӗҫлипе хакламалла

Ҫӗмӗрле районӗнчи учительсен канашлӑвӗ «1953—1954 вӗренӳ ҫулӗнче учительсен умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен» районти ҫутӗҫ пайӗн заведующийӗ Пробейкин юлташ тунӑ доклада сӳтсе яврӗ.

Докладчикпа тухса калакан юлташсем иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче халӑха вӗрентес ӗҫре тунӑ хӑшпӗр ӳсӗмсене, малашнехи задачӑсене палӑртрӗҫ. Районта вӗренекенсен шучӗ ҫулсерен ӳссе пырать.

Шкулсен шучӗ те нумайланса пырать. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче ҫичӗ ҫул вӗренмелли икӗ шкул тата ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн филиалне уҫнӑ. Халӗ районта 38 шкул ӗҫлет.

Шкул ҫулне ҫитнӗ ачасене пурне те ҫичӗ ҫултан кая мар вӗрентме условисем хатӗрлес тӗлӗшпе чылай ӗҫсем тунӑ. Виҫӗ шкул ҫумӗнче интернатсем уҫнӑ, 150 вӗренекене пурне те хутла вӗрентмелли фондран тата колхозсенчен пулӑшу парса тӑнӑ. Нумай учительсем ачасене вӗрентме кирли ҫинчен, ку тӗлӗшпе пирӗн тӑван партипе Совет правительстви мӗнле пысӑк ӗҫсем туса пыни ҫинчен ачасен ашшӗ-амӑшӗсене ӑнлантарса панӑ.

Иртнӗ ҫулта халӑха вӗрентес ӗҫ валли, районӗпе илсен, 6.541.700 тенкӗ укҫа расходланӑ. Кӑҫал унтан чылай ытларах укҫа хывма палӑртнӑ. Хутар, Янташ ялӗсенче, Красный Октябрь поселокра тата ытти чылай ҫӗрте шкулсене юсанӑ.

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ халӑха вӗрентес тӗлӗшпе пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. Анчах та ҫак пысӑк та хисеплӗ задачӑсене пӗтӗмӗшпех пурнӑҫламалла тӑвас тӗлӗшпе районти ҫутӗҫ пайӗпе шкулсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Пурне те вунӑ ҫул вӗрентме хатӗрленес тӗлӗшпе ҫутӗҫ учрежденийӗсен руководителӗсем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ, государство шкулсене куллен паракан пулӑшупа кирлӗ таран усӑ курмаҫҫӗ. Ҫул ҫитнӗ ачасене пурне те ҫичӗ ҫул вӗрентес тӗлӗшпе район юлса пырать. Иртнӗ ҫулта, районӗпе илсен, 13 ачана вӗренӗве хутшӑнтармасӑр хӑварнӑ. 63 вӗренекен шкула ҫӳреме пӑрахнӑ.

Канашлура тухса калакан юлташсем уйрӑмах политехникӑлла вӗренӳри тата ӑна пурнӑҫлама хатӗрленес ӗҫри ҫитменлӗхсене палӑртрӗҫ. Политехникӑлла вӗренӳ наглядлӑй пособисемпе, опытсемпе, экскурсисемпе, предмета тӗплӗн ӑнланма пулӑшакан мӗнпур майсемпе ытларах усӑ курас задача кӑларса тӑратать. Анчах чылай шкулсен руководителӗсем вӗренӳре кирлӗ наглядлӑй пособисемпе ытти япаласем хатӗрлес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Чылай ҫӗрте шкул участокӗсенче практикӑлла занятисемпе опытлӑ ӗҫсем туса ирттересси ҫинчен РСФСР Ҫутӗҫ министерстви кӑтартса панисене пурнӑҫласа пымаҫҫӗ. Вырӑс Улхашри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул директорӗпе вӗренӳ пайӗн заведующийӗ (Устиновпа Евдокимов юлташсем) шкул участокӗнче опытлӑ ӗҫсем йӗркелессинчен пачах пӑрӑннӑ. Ку таранччен те кунта участокра вӗрентӳпе производство ӗҫне тапратман. Учитель Евдокимов юлташ вӗрентӳ ӗҫӗ ҫине сиелтен пӑхать. Вӑл иртнӗ ҫулта биологи предмечӗпе вӗренӳ программине те тултарман, биологи кабинетне пачах юрӑхсӑра кӑларнӑ.

Мӑн Улхашри, Хутарти, Анат Кӑмашари шкулсенче те опыт тумалли участоксене кирлӗ пек йӗркелемен. Политехникӑлла вӗренӗве йӗркелес тата пур ҫӗрте те политехникӑлла вӗренӗве кӳртме кирлӗ ӗҫсем тӑвас тӗлӗшпе ытти чылай шкулсенче те ҫитменлӗхсем нумай.

Канашлу вӗрентӳпе воспитани ӗҫне, политехникӑлла вӗренӗве лайӑхлатмалли майсене палӑртрӗ.

Канашлура иккӗмӗш ыйтупа «Пионер тата комсомол организацийӗсен вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗнчи ролӗ» ҫинчен сӳтсе яврӗҫ. Ку ыйтупа ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ Быкова юлташ доклад турӗ.

Учительсен канашлӑвӗнче Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн заместителӗ Д. Н. Полукаров юлташ пулчӗ. Д. Н. Полукаров юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн ӗҫӗсем ҫинчен доклад туса пачӗ.

Н. НИКИТИН.

Кӗрхи ҫӗртмене вӑхӑтра тӑвар

Колхозниксемпе механизаторсем умӗнче халӗ кӗрхи ҫӗртме сухине чи лайӑх срокра туса хӑварас задача тӑрать. Ҫав ӗҫе тума тракторсемпе ҫуртӑм вӑйӗ ҫителӗклӗ уйӑрса памалла, кӗрхи ҫӗртме сухаламалли график пурнӑҫа кӗрсе пынине куллен тӗрӗслесе тӑмалла.

Кӗрхи ҫӗртме тӑвасси колхозшӑн закон пулса тӑрать. Кӑҫал кӗркунне колхозсемпе МТС-сен ҫитес ҫул кӗрхи тырӑсем акмалли ҫӗр лаптӑкне пӗтӗмпех сухаласа хӑвармалла.

Ҫӗре кӗркунне сухаласа хатӗрлени агротехникӑн паллӑ задачисене татса пама кирлӗ. Тӑпрана структурӑллӑ тума, вӑрлӑха шӑтса ӳсме кирлӗ условисем хатӗрлеме, ҫумкурӑксемпе тырпула сиен тӑвакан хурт-кӑпшанкӑсене хирӗҫ кӗрешме кӗркунне хӑмӑла сухаламалла, ҫӗре предплужниклӑ плугпа тӗпрен сухаласа хӑвармалла.

Хӑмӑла тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра дисклӑ лущильникпа е тулӑ плугӗпе 5 сантиметр тарӑнӑш сухалаҫҫӗ. Хирте тымартуналлӑ ҫумкурӑксем (шурут т. ыт. те) нумай пулсан, хӑмӑла тарӑнрах сухаламалла.

Хӑмӑла сухалама дисклӑ лущильнике комбайн хыҫне кӑкарса яраҫҫӗ. Тырпула ахаль машинӑсемпе вырнӑ чухне кӗлтесене пӗр рете тачӑрах тӗнсем туса тухаҫҫӗ те ретсем хушшинчи хӑмӑла сухалаҫҫӗ.

Хӑмӑла вӑхӑтра сухалани ҫӗре типсе каясран сыхлать, мӗншӗн тесен тырпула пухса илнӗ хыҫҫӑн тӑпрари нӳрӗ хӑвӑрт пӑсланса пӗтет. Хӑмӑла сухалама кая юлсан, ҫӗр типсе каять, вара ӑна сухалама йывӑр пулать, сухаланӑ чухне горючи ытларах пӗтет. Кунсӑр пуҫне, хӑмӑла вӑхӑтра сухаласан тӑпра нӳре ытларах сӑхса юлать. Хӑмӑла сухаланӑ хыҫҫӑн участока ҫӳреме кирлӗ мар, мӗншӗн тесен тикӗс мар ҫӗр сийӗ ҫумӑр шывне лайӑхрах тытса юлать.

Унтан ҫӗре предплужниклӑ плугпа 20 сантиметртан кая мар сухалаҫҫӗ, ҫакна кӗрхи ҫӗртме теҫҫӗ. Хура тӑпра сийӗпе лайӑхрах усӑ курас тесе тата ялан пӗр тарӑнӑш сухаланӑ пирки сухалакан сий айӗнче хытӑ сий пулса юласран, ҫӗре хушӑран-хушӑран 25—27 сантиметр сухалас пулать. Кӗллӗ тӑпрасен сухалакан сийне майӗпен кашни ҫул икӗ-виҫӗ е пилӗк сантиметр тарӑнлатса пымалла.

Вӑтам тата нумай кӗлленнӗ тӑпрасен ҫиелти сийӗ айӗнче тухӑҫсӑр сий хулӑн пулсан, сухалакан сие тарӑнлатнӑ чухне минераллӑ удобренисемпе пӗрле гектар пуҫне 30—40 тонна тислӗк тӑкмалла, йӳҫӗк тӑпрасем ҫине известь сапмалла.

Кӗллӗ тӑпрасен сухалакан сийне хура ҫӗртме е ирхи ҫӗртме тунӑ чухне тарӑнлатма аван, мӗншӗн тесен ун чухне ҫиелте выртакан кӗллӗ тӑпра сийӗ удобренисемпе лайӑхрах хутшӑнать. Анчах сухалакан сие кӗрхи ҫӗртме тунӑ чухне те тарӑнлатма пулать. Ун пек чухне удобренисене ҫуркунне хываҫҫӗ, ҫӗре кӗркунне сухаланинчен кӑшт ӑшӑхрах сухаласа удобренисене тӑпрапа витсе хӑвараҫҫӗ.

Малта пыракан колхозсен опычӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, кӗллӗ тӑпрасен сухалакан сийне тарӑнлатни пусӑ ҫаврӑнӑшӗнчи пур культурӑсен тухӑҫлӑхне те ӳстерет.

Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозра кӗллӗ тӑпрасен сухалакан сийне майӗпен 30—35 сантиметр тарӑнӑшне ҫитернӗ. Ҫӗре ҫавӑн тарӑнӑш сухалани, агротехника кӑтартса паракан ытти ӗҫсене лайӑх туса пынӑ чухне, ҫурхи тулӑпа ыраш тухӑҫлӑхне гектар пуҫне 32—35 центнер ӳстерме май панӑ.

Ҫӗре предплужниклӑ плугпа сухалани тӑпран сухалакан сийне кашни ҫулах структурӑллӑ тума май парать. Кирек мӗнле тӑпран та ҫиелти 10 сантиметр хулӑнӑш сийӗ ҫу каҫа хӑйӗн структурлӑхне ҫухатать. Ҫав вӑхӑтрах тӑпран ҫиелти сийӗнче тымарсем тата хӑмӑл юлашкисем нумай пулаҫҫӗ; тымарсемпе хӑмӑл юлашкисене сывлӑш кӗмен ҫӗрте ҫӗрме условисем туса парсан, вӗсенчен тӑпрана структурӑллӑ тӑвакан ҫӗрӗк тӑпри пулать. Анчах сывлӑш сухалакан сийӗн аялти сийне кӑна кӗмест. Тӑпран ҫиелти сийӗнче тымарсемпе хӑмӑл юлашкисем нумай пулнӑран, вӑл ҫӗрем еврӗлӗ пулса тӑрать, сухаланӑ чухне лайӑх саланмасть, ҫавӑнпа та ӑна предплужниксӑр сухаласан, ӗҫ пахалӑхӗ нумай чакать.

Предплужнике лайӑх йӗркелесе лартмалла: вӑл ҫиелти сие лайӑх ҫаврӑнса, касӑ тӗпне пӑрахса пытӑр. Ун пек тумасан, тикӗс сухалама май ҫук. Нумай ҫул ӳсекен курӑксем, уйрӑмах люцерна, пулнӑ вырӑна сухаланӑ хыҫҫӑн, предплужник тӗрӗс ӗҫлемесен, курӑк тепӗр хут шӑтса тухма пултарать.

Предплужнике тӗп корпус умне вырнаҫтарса лартаҫҫӗ. Трактор плугӗн предплужник тимӗрӗн вӗҫӗпе тӗп корпус тимӗрӗн вӗҫӗ хушши 20—25 сантиметр пулмалла. Предплужник ҫӗре тӗп корпуспа пӗр йӗрпе касса пымалла, уйрӑмлӑх пӗр сантиметртан ытла пулмалла мар. Плуг ҫӗҫҫи предплужникпа тӗп корпус хушшинче пулмалла.

В. Р. Вильямс ҫӗре предплужниклӑ плугпа сухалани пысӑк вырӑна хунӑ. «Ҫӗре предплужниклӑ плугпа культурӑллӑ сухалани революцилле совет агрономийӗн чи паха задачи пулать...» тенӗ вӑл.

Хӑмӑла сухалани, кӗрхи ҫӗртме туни ҫитес ҫулхи ҫуракине хатӗрлени пулать.

Кӗрхи ҫӗртмене вӑхӑтра та лайӑх сухаласа хӑварсан, ҫитес ҫул вӑйлӑ тырпул туса илӗр.

Ф. АБАКУМОВ,
агроном.

Государствӑна—тырӑ

МУРКАШ. «Знамя коммунизма» колхоз августӑн 25-мӗшӗ тӗлне хатӗрлев пунктне 760 центнер тырӑ леҫсе государствӑна тырӑ памалли плана тултарчӗ. МТС ӗҫленӗшӗн натуроплата шучӗпе хатӗрлев пунктне тырӑ чылай леҫнӗ.

Ҫак ӗҫре уйрӑмах Н. Стаканов шофер хастарлӑ ӗҫлесе пычӗ. Вӑл Шупашкарти хатӗрлев пунктне автомашинӑпа 41 рейс туса 1.025 центнер тырӑ турттарса пачӗ.

С. ТИХОНОВ.

* * *

КАЛИНИНО. «Салют» колхозра государствӑна тырӑ парассине лайӑх йӗркеленӗ. Икӗ автомашинӑпа кашни кун 211 центнер тырӑ леҫсе тӑраҫҫӗ.

Колхоз тырӑ памалли графика 115,5 процент тултарса, парти райкомӗпе район Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

В. ВАСИЛЬЕВ.

Тимӗр-тӑмӑр ытларах пухар

Предприятисемпе колхозсенче, организацисенче кивӗ тимӗр татӑкӗсем нумай пухӑнаҫҫӗ. Вӗсем усӑсӑр выртаҫҫӗ. Ҫав тимӗре пухса заводсене ӑсатсан, ӑна шӑратса хурҫӑ тӑваҫҫӗ. Хурҫӑ машинӑсем тума каять. Ҫакӑнтан тимӗр-тӑмӑр пухни государствӑшӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫ пулни лайӑхах курӑнать.

Тимӗр-тӑмӑр пухас ӗҫе хуласемпе ялсенче, предприятисенче, колхозсенче тивӗҫлипе йӗркелес пулать. Ку ӗҫшӗн вырӑнти организацисен руководителӗсем ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ.

Анчах ку тӗлӗшпе пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине палӑртмалла. Чылай предприятисенче ҫак ӗҫе япӑх йӗркеленӗ. Сӑмахран, Шупашкарти Чебторг тата столовӑйсемпе ресторансен трестчӗн руководителӗсем тимӗр-тӑмӑр пухмалли плана пурнӑҫлама тӑрӑшмаҫҫӗ. Тимӗр пробкӑсемпе банкӑсене пухмаҫҫӗ, вӗсене ҫӳп-ҫапсемпе пӗрле кӑлара-кӑлара пӑрахаҫҫӗ. Етӗрнери спирт завочӗ, Шупашкарти макарон фабрики, Шупашкарти сӑра завочӗ кивӗ тимӗр пухмалли плана 50-шар процентран ытла тултараймаҫҫӗ. Ҫакӑн пек ҫителӗксӗр ӗҫлекен организацисем татах пур.

Сӗнтӗрвӑрринче тимӗр-тӑмӑр пухас ӗҫе пачах хакламаҫҫӗ. Районти предприятисемпе артельсенче тимӗр-тӑмӑр сахал мар. Анчах ӑна пухма тӑрӑшмаҫҫӗ.

Чылай предприятисенче юрӑхсӑра тухнӑ оборудовани пур. Кивелнӗ е ҫӗмӗрӗлнӗ механизмсем предприятисене нимӗнле усӑ та памаҫҫӗ. Вӗсене государствӑна парас пулать. Анчах предприятисен руководителӗсем ҫак ӗҫе хакламаҫҫӗ. Акӑ, сӑмахран, Етӗрнери спирт заводӗнче 40 тонна таякан юрӑхсӑра тухнӑ двигатель пур. Ӑна государствӑна парасси ҫинчен завод руководителӗсем аса илмеҫҫӗ-ха.

Тимӗр-тӑмӑр пухмалли плана ӑнӑҫлӑ тултарма условисем ҫителӗклӗ. Ҫав ӗҫӗн пӗлтерӗшне ӑнланса илсе, ӗҫе тӗрӗс йӗркелени кирлӗ. Канаш, Ҫӗрпӳ, Куславкка, Ҫӗмӗрле, Шӑхасан районӗсем т. ыт. те плана уйӑхран уйӑха ӑнӑҫлӑ тултарса пыраҫҫӗ. Иккӗмӗш кварталта лайӑх ӗҫленӗшӗн Канаш районӗ Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Тимӗр-тӑмӑр пухас ӗҫӗн пӗлтерӗшӗ ҫинчен кашни ӗҫсыннине ӑнлантарса парас пулать. Кашни совет ҫынни ҫак ӗҫе лайӑх йӗркелени государствӑна пысӑк усӑ пани ҫинчен пӗлсе тӑтӑр тесе тӑрӑшмалла. Пухнӑ тимӗр-тӑмӑр хурҫӑ шӑратса кӑларма, унтан вара тракторсем, комбайнсем, автомобильсем тата ытти машинӑсемпе япаласем тума каять.

П. СОФРОНОВ.

Л. Н. Толстой юбилейне хатӗрленсе

Кӑҫалхи сентябрӗн 9-мӗшӗнче вырӑссен аслӑ писателӗ Лев Николаевич Толстой ҫуралнӑранпа 125 ҫул ҫитет. Ҫакна паллӑ тума пӗтӗм ҫӗршыв хатӗрленет.

Пирӗн республикӑри ӗҫсыннисем Л. Н. Толстой юбилейне чыслӑн паллӑ тума хатӗрленеҫҫӗ. Библиотекӑсенче, вуламалли ҫуртсенче, шкулсенче аслӑ писателӗн пурнӑҫӗпе творчествине кӑтартакан выставкӑсемпе витринӑсем тӑваҫҫӗ, унӑн произведенийӗсем тӑрӑх каласусем ирттереҫҫӗ.

Шупашкарти М. Горький ячӗпе тӑракан библиотекӑра Л. Н. Толстой произведенийӗсен витринине тунӑ. Унта аслӑ писателӗн портречӗ, вӑл ҫырнӑ «Война и мир», «Анна Каренина», «Воскресение», «Хаджи-Мурат», «Казаки» тата ытти произведенисем те пур.

Выставкӑра Л. Н. Толстой ҫинчен В. И. Ленин каланӑ сӑмахсем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Ҫавӑн пекех кунта А. М. Горький, Н. Г. Чернышевский, Г. В. Плеханов тата ытти паллӑ ҫынсем аслӑ писателе хакласа каланӑ сӑмахсене ҫырнисем пур.

Библиотека юбилей кунӗсенче вулакансемпе литература вечерӗ ирттерет. Унта писательсем, преподавательсем хутшӑнаҫҫӗ.

Колхозри строительство

ВӐРНАР. Ҫӗнелсе илемленет колхозлӑ Уравӑш ялӗ. Кунта ҫулсеренех обществӑлла ҫӗнӗ ҫуртсем, вуншар колхозниксем ҫӗнӗ пӳртсем лартаҫҫӗ. 400 ҫын вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ клуб тӑваҫҫӗ. Вӑл ялти чи илемлӗ вырӑнта, йывӑҫсем айӗнче ларать. Кунта фойе, библиотека, кружоксем валли уйрӑм пӳлӗмсем пулаҫҫӗ. Строительсем клубри юлашки ӗҫсене тӑваҫҫӗ. Клуба хирӗҫех ялпа хуҫалӑхра кирлӗ таварсем сутмалли ҫӗнӗ магазин тӑвать.

Колхоз амбарӗсем патӗнче механизациленӗ верносушилкӑн ҫуртне туса пӗтерчӗҫ. МТС работникӗсем механизмсене вырнаҫтарса ҫитереҫҫӗ. Уйпер шывӗ хӗрринче саман кирпӗчрен чӑх-чӗп вити тӑвас ӗҫ пырать. Ӑна октябрь уйӑхӗ тӗлне туса пӗтерме палӑртнӑ. Ҫавӑн пекех вунӑ колхозник ҫӗнӗ пӳртсем лартаҫҫӗ.

С. ЮРКИН.

Пӗр ҫемьерен 5 учитель

ШӐХАСАН. Анат-Вӑрман ялӗнче пурӑнакан Капитон Павлов ҫемйи патша саманинче ҫав тери чухӑн пурӑннӑ. Совет влаҫӗ пулсан тин К. Павлов ҫемйишӗн ырӑ пурнӑҫ пуҫланнӑ. Унӑн ачисем, педагогика училищинчен е институтран вӗренсе тухса, шкулта ӗҫлеме тапратнӑ. Халӗ ҫак ҫемьерен пилӗк ҫын учитель пулса ӗҫлеҫҫӗ.

М. СТЕПАНОВА.

Шахтерсем валли

Ӗҫсыннисен йӑла условийӗсене малалла лайӑхлатса пырасси пурӑнмалли ҫуртсем ытларах та ытларах туса кӑларнинчен сахал мар килет. Ҫавӑнпа Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви пурӑнмалли ҫуртсем лартассине пысӑка хурса хаклаҫҫӗ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче хуласемпе поселоксенче 155 миллион тӑваткал метр ҫурт лартнӑ. Ялсенче ҫав вӑхӑтрах 3 миллион та 800 пин ытла ҫурт лартнӑ. Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ йышӑннӑ тӑрӑх, пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхра государство пурӑнмалли ҫуртсем тума, тӑваттӑмӗш пилӗкҫуллӑхрипе танлаштарсан, икӗ хута яхӑн укҫа-тенкӗ нумайрах хывать. Кӑҫалхи план тӑрӑх, ҫӗршывра, вӑрҫӑчченхипе танлаштарсан, тӑватӑ хут нумайрах ҫуртсем лартмалла.

Партипе правительство кӑларса тӑратнӑ задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласси Куславккари ҫуртсем тӑвакан заводран та сахал мар килет. Пирӗн завод ҫӗршыври ҫӗр кӑмрӑк кӑларакан рабочисем—шахтерсем—валли пурӑнмалли ҫуртсем туса кӑларать. Партин XIX-мӗш съезчӗ йышӑннӑ решенисемпе хавхаланса, рабочисем, инженерсемпе техниксем продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн, ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ йышши ҫуртсем тӑвассишӗн вӑй шеллемесӗр кӗрешеҫҫӗ. СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ йышӑннӑ решенисем завод коллективӗн ответлӑхне тата ытларах ӳстереҫҫӗ.

Цехсенче, участоксенче, бригадӑсенче шахтерсен кунне ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн социализмла ӑмӑрту анлӑ сарӑлчӗ. Пин ҫын ытла социализмла обязательство йышӑнчӗ. Цехсем хушшинчи ӑмӑртура хӑма суракан цех малта пырать. Цех коллективӗ хӑватлӑ техникӑпа туллирех усӑ курассишӗн, технологи процесне ҫӗнетсе лайӑхлатассишӗн кӗрешет. Рабочисем, инженерсемпе техниксем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, продукци пахалӑхне хӑпартма, производство каяшӗсемпе усӑ курма пулӑшакан паха ҫӗнӳсем чылай параҫҫӗ. Рационализаторсем ҫӗннине хӑма суракан рамӑсене ҫӗнетнӗ, хӑватне ӳстернӗ, пӑчкӑсен шӑлӗсене ҫӗнӗ майпа хӑйраса йӗркелеме тытӑннӑ. Ҫыран хӗрринче пӗренесем ҫумне хӑйӑр тата юшкӑн ҫыпҫӑнать. Вараланнӑ пӗренесене ҫурма касӑтерех, пӑчкӑ шӑлӗсем хӑвӑрт мӑкалаҫҫӗ. Ҫавна шута илсе, рационализаторсем пӗренесене шывпа ҫуса тасатмалли хатӗрсем тума сӗнчӗҫ. Вӗсен сӗнӗвне пурнӑҫа кӗртни рамӑсен тухӑҫлӑхне ӳстерчӗ. Цехра производство каяшӗсем чакрӗҫ. Коллектив ҫавӑн пек пуҫарулӑх ӗҫленине пула цех йывӑҫран ӗҫе юрӑхлӑ материалсем 68 процент таран туса кӑларма тытӑнчӗ. План тӑрӑх, кашни 100 кубометр йывӑҫран 63,7 кубометр паха материал кӑлармалла. Цех кварталта вуншар пин кубометр йывӑҫ сурать. Урӑхла каласан, цех планран ирттерсе материалсем чылай кӑларни продукци ытларах туса кӑларма, перекетлӗхе ҫирӗплетме пулӑшать. Ку цехри паха тӗслӗхсем ытти цехсен коллективӗсен творчествӑлла пултарулӑхне ӳстереҫҫӗ.

Ҫуртсем тӑвакан, столярнӑй, сушильнӑй, механически цехсенче те ӗҫ тухӑҫлӑхӗ уйӑхран уйӑха ӳсет, продукци пахалӑхӗ хӑпарать. Завод коллективӗн пуҫарулӑхӗпе пултарулӑхӗ вӑйланса пынине кӑтартакан тӗслӗхсем нумай. Шахтерсен кунӗ ячӗпе ӑмӑртса ӗҫленӗ вӑхӑтра рационализаторла сӗнӳсемпе изобретенисем пухмалли тата вӗсене пурнӑҫа кӗртмелли икӗ уйӑхлӑх тата обществӑлла смотр ирттертӗмӗр. Рабочисем, инженерсемпе техниксем ҫулталӑкра ҫур миллион тенкӗ перекетлеме май паракан сӗнӳсем пачӗҫ. Кӑҫал панӑ рационализаторла сӗнӳсемпе изобретенисем ҫулталӑкра 1,5 миллион тенкӗ перекетлеме пулӑшаҫҫӗ.

Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем хӑйсен опытӗнчен кашни кунах ҫакна курса ӗненеҫҫӗ: производствӑна лайӑх организацилени, ҫӗнӗ техникӑпа усӑ курни, ӗҫе лайӑхлатмалли тӗрлӗ майсемпе изобретенисем яланах ӗҫе ҫӑмӑллатаҫҫӗ, ӗҫсыннисен пурнӑҫне лайӑхлатаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та заводра рационализаторсемпе изобретательсен шучӗ ҫултан ҫул ӳсет.

Уйрӑмах хӑшпӗр рационализаторсен пуҫарулӑхне палӑртас пулать. Ҫуртсем тӑвакан цехри М. Березкин технорук алӑксене икӗ пуҫӗнчен те пӗр харӑс касса якатмалли станок шухӑшласа кӑларчӗ. Ҫав цехри И. Портнов механик УДП станок ҫумне ӗҫе ҫӑмӑллатма тата операцисене хӑвӑрт тума пулӑшакан хатӗр тума сӗнчӗ. Н. Баганов рабочи, ӗҫе ҫӗнӗлле йӗркелесе, нормӑна куллен 250—300 процент таран тултарса пырать. Ҫавӑн пек паха тӗслӗхсем тата нумай.

Пирӗн завод коллективӗ ҫӗршыври малта пыракан предприятисен опычӗпе, наукӑпа техникӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсемпе усӑ курма тӑрӑшать. Пӑчкӑ шӑлӗсене эпир Архангельск хулинчи новаторсен меслечӗпе хӑйраса йӗркелетпӗр. Ытти предприятисен примерӗпе столярнӑй цехра станоксене ҫӗнӗлле куҫарса лартрӑмӑр. Ӑна пурнӑҫлани технологи процесне лайӑхлатма, материалсене пӗр станокран тепӗр станок патне илсе пырассине икӗ хут чакарма пулӑшрӗ.

Куславккари ҫуртсем тӑвакан заводри рамщик И. Смирнов. Вӑл сменӑри нормӑна 115 процент тултарса пырать.

А. КОСТИН фотоӳкерчӗкӗ.

Наукӑпа техникӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсемпе усӑ курас, технологи процесне пӗрмаях лайӑхлатса пырас, рационализаторсемпе изобретательсене куллен пулӑшас ӗҫе дирекци ҫумӗнче организациленӗ техникӑлла совет ертсе пырать. Вӑл Ленинградри хулинчи тӗпчев институчӗсемпе ҫыхӑну тытать, новаторсен техникӑлла пултарулӑхне малалла аталантарса пырать.

Социализмла ӑмӑртӑва коммунистсем пуҫарса ертсе пыраҫҫӗ. Вӗсем хастарлӑ ӗҫпе, хӗрӳллӗ сӑмахпа ыттисене тухӑҫлӑрах ӗҫлеме хавхалантараҫҫӗ, производствӑри резервсене хӑюллӑн палӑртаҫҫӗ, дирекципе цехсен руководителӗсене ҫитменлӗхсене пӗтерме, малта пыракансен опычӗпе меслетне сарма пулӑшаҫҫӗ. Уйрӑмах коммунистсем рабочисене коммунизмла воспитани парас, дисциплинӑна ҫирӗплетес, хӑйсен опычӗпе ыттисене паллаштарас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттернине палӑртас пулать.

Цехсенчи парторганизацисем цехсен руководителӗсен ӗҫне тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑни ҫитменлӗхсене сиввӗнчех пӗтерме, умра тӑракан задачӑсене чыслӑ пурнӑҫласа пыма пулӑшать. Нумай агитаторсем, пропагандистсем, докладчиксем агитаципе массӑлла ӗҫе производство ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарса туса пыраҫҫӗ,—производство планне ӑнӑҫлӑ тултарма мобилизациллеҫҫӗ.

Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ йышӑннӑ решенисене пропагандӑлани, пухусем, канашлусем тӑтӑшах ирттерни, самокритикӑпа аялтан килекен критикӑна анлӑ сарни, рабочисен сӗнӗвӗсемпе шухӑш-туйӑмӗсене вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртни, техникӑна вӗрентес ӗҫе йӗркелени—ҫаксем вӗсем пурте коллективӑн творчествӑллӑ активлӑхне вӑйлатмалли майсем пулаҫҫӗ. Ҫӗршер рабочи ӗҫ нормине тӑтӑшах ирттерсе тултарать, вуншар рабочи ҫитес пилӗкҫуллӑх шучӗпе ӗҫлет. Сдельно ӗҫлекен кашни вунӑ рабочирен саккӑрӑшӗ стахановец ятне илме тивӗҫлӗ пулни коллективӑн пуҫарулӑхӗпе пултарулӑхӗ чылай ӳснине кӑтартать. Завод ҫакӑр уйӑхри производство планне августӑн 26-мӗшӗ тӗлне тултарчӗ, паянхи куна шахтерсем валли планран ирттерсе чылай ҫурт туса кӗтсе илчӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес, продукци пахалӑхне лайӑхлатас, материалсемпе чӗртавар перекетлес тӗлӗшпе те хӑшпӗр ҫитӗнӳсем тунӑ.

Асӑннӑ тӗслӗхсем заводра ҫитменлӗхсем тата резервсем ҫуккине пӗлтермеҫҫӗ. Чи пысӑк ҫитменлӗх вӑл—хӑшпӗр цехсем пӗр тикӗс, график тӑрӑх ӗҫлеменни, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетессишӗн кирлӗ пек кӗрешменни. Хӑшпӗр йывӑр операцисене, уйрӑмах пӗренесене тиесе пушатас ӗҫе, кирлӗ пек механизацилесе ҫитермен. Государство ҫирӗплетсе панӑ плана пысӑк пахалӑхпа тултарассишӗн тимлӗн кӗрешмен мастерсемпе техниксем те пур-ха. Партипе профсоюз организацийӗсем, дирекци ҫав ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтерме тӑрӑшаҫҫӗ.

Малашне завод умӗнче халиччен нумай пысӑкрах задачӑсем тӑраҫҫӗ: пурӑнмалли ҫуртсем тата паркет ытларах туса кӑлармалла, пахарах та илемлӗрех ҫуртсем тума тытӑнмалла. Производство планне уйӑхран уйӑха ӑнӑҫлӑ тултарассишӗн кӗрешнӗ вӑхӑтрах, хӗле пысӑк пахалӑхпа хатӗрленсе ҫитмелле, йывӑр ӗҫсене механизацилемелле.

СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ социализмла халӑх хуҫалӑхне малалла аталантарма, ӗҫсыннисен пурнӑҫне лайӑхлатма, культурине ӳстерме пулӑшакан законсем йышӑнчӗ. Ҫав законсене чыслӑ пурнӑҫлас тесен предприятисен, хуҫалӑх организацийӗсен ӗҫне тӗпрен ҫӗнетсе лайӑхлатмалла, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетмелле, перекетлӗх режимне ҫирӗплетмелле. Сесси материалӗсене вӗреннӗ май рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем продукци пахалӑхне лайӑхлатма, чӗртаварпа материалсем, электроэнерги перекетлеме пулӑшакан сӗнӳсем чылай пачӗҫ. Завод коллективӗ 1953 ҫулхи производство планне декабрӗн 5-мӗшӗ тӗлне тултарассишӗн, шахтерсене планран ирттерсе чылай ҫурт туса парассишӗн кӗрешет. Цехсенче, бригадӑсенче хӗрӳллӗ ӗҫ вӗресе тӑрать. Кашни рабочи, инженер, техник тӑван ҫӗршыв экономикине тата хӑвӑртрах аталантарассишӗн, ӗҫсыннисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

П. КОВАЛЕНКО,
Куславккари ҫуртсем тӑвакан завод директорӗ.

Тĕнчери лару-тăру

ГЕРМАНИ ЫЙТĂВНЕ МИРЛĔН ТАТСА ПАМАЛЛИ ÇУЛ

Совет правительстви Германи ыйтăвĕ тĕлĕшпе августăн 15-мĕшĕнче США, Англи, Франци правительствисене панă нотăна тата Мускавра Демократиллĕ Германи Республикин правительство делегацийĕпе калаçусем ирттерни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă хыççăн, буржуалла пропагандистсем Совет Союзĕн политикине пăсса кăтартас, çак документсене «пропаганда» тумалли утăм вырăнне кăна хума пăхса тĕлĕшпе сахал мар вăй хучĕç. Вĕсен шучĕпе çак документсем Бонн парламентне сентябрĕн 6-мĕшĕнче пулакан суйлавĕнче Аденауэр ушкăнне поражени кӳрес тĕллев кăна тытаççĕ имĕш.

Буржуалла пропагандистсем темĕн пек тапăçланаççĕ пулсан та тĕнчери общественносран çак факта пытарса тăма пултараймаççĕ: Совет правительстви Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса памалла тăвас тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсем вĕсем Совет Союзĕ тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас, мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес тĕллевпе тытса пыракан политикăн пĕр пайĕ пулса тăраççĕ. Буржуалла пропагандăна пăхмасăр, тĕнчери халăхсем Совет правительствин Германи ыйтăвĕ тăрăх йышăннă решенисене—мире юратакан тата демократиллĕ, пĕрлĕхлĕ Германи туса хурас ĕçре тунă пысăк утăм вырăнне хурса хаклаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсене мирлĕ майпа йĕркелес ĕçре Германи ыйтăвне татса пани историллĕ вырăн йышăнса тăнине пурте йышăнаççĕ. Г. М. Маленков юлташ Кремльте августăн 22-мĕшĕнче пулнă апатланура каланă хăйĕн сăмахĕнче çакна кăтартса пачĕ: «Германи е Европăра мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетес ĕçре пысăк факторсенчен пĕри пулса тăма, е çĕнĕ агресси Европăри тĕп вучахĕ пулса тăма пултарать».

Германи халăхĕ умĕнче икĕ çул тăрать: çĕршыва пайласа тăмалли тата агресси çулĕ тата пĕрлĕхпе мир çулĕ. Америкăри реакциллĕ хаçатсем те çакна йышăнаççĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви пулăшса пыракан Аденауэр политикин тĕллевĕ вăл Германи пайланса тăнине çаплипех хăварасси, Хĕвеланăç Германирен милитаризмпа реваншизм вучахĕ туса хурасси пулать. США-ри монополиллĕ ушкăнсен хаçачĕ «Уолл-стрит джорнэл» çак кунсенче çапла çырнă: «Пирĕн политика, паллах ĕнтĕ, Германие пайлас шухăш çинче тытăнса тăрать. Эпир ку таранччен мĕн тунă е тата мĕн тума шутлатпăр, вĕсем пурте çак шухăш çинче никĕсленсе тăраççĕ. Официальнăй пĕлтерӳсенче эпир Германи хăçан та пулин пĕрлешме пултарать тесе калатпăр, анчах хамăр ĕçсенче эпир çакна хирĕç пыратпăр. Çавăн çинчен нимĕçсем хăйсем те пĕлеççĕ».

СССР Правительстви нота панă май тата Мускавра Совет Союзĕпе Германи хушшинче калаçусем ирттернĕ май, Америкăри чылай хаçатсенче США Германи тĕлĕшпе тытакан политикăна критиклекен статьясем пичетленсе тухрĕç. Сăмахран, Америкăра тухса тăракан «Курьер джорнэл» хаçат çапла çырать: Совет правительствин çĕнĕ ноти (сăмах августăн 15-мĕшĕнчи ноти çинчен пырать) «пирĕншĕн каллех кĕтмен çĕртен пулчĕ. Пирĕншĕн ĕнтĕ ялан çавăн пек пулать». Анчах кунта ĕç пĕре те американ уйрăм дипломачĕсем хăйсене тыткалама пĕлменни е вĕсен кăнттамлăхĕ çинчен пымасть. Америка хаçачĕсем ĕçе шăпах çакăн пек кăтартма хăтланаççĕ ĕнтĕ. Ĕç акă мĕнре: Америка Германи тĕлĕшпе тытакан политика Германи халăхĕн нациллĕ интересĕсене хирĕç пырать, çавăнпа та çак политикăна Германи халăхĕ тăтăккăн сирсе пăрахать, мĕншĕн тесен çак политикăн тĕллевĕ вăл çĕршыва пайласа тăрасси тата Хĕвеланăç Германие хĕçпăшаллантарасси пулать.

Германи халăхне пысăк сиен кӳнĕ иртнĕ икĕ вăрçă Хĕвеланăç Германири буржуалла паллă ушкăнсене те, Аденауэрпа ăна хӳтĕлекенсем хатĕрлекен çĕнĕ вăрçă мĕн патне илсе пыма пултарас пирки, хытă шухăшлаттарать. Ахальтен мар ĕнтĕ Хĕвеланăç Германире ытларах та ытларах Хĕвелтухăçпе Хĕвеланăç Германи хушшинче калаçусем ирттерессишĕн, Германи ыйтăвĕ тăрăх аслă державăсен конференцине пухассишĕн, хăвăртрах мирлĕ договор тăвассишĕн сăмахлаççĕ. Пĕрлĕхшĕн, миршĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешекен нимĕçсен союзĕн представителĕ, Германи канцлерĕ пулнă Вирт Мускаври калаçусем пирки хăйĕн шухăшне пĕлтернинче çакна кăтартса панă: «Калаçу результачĕсем пирĕн çакă шухăша çирĕплетсе параççĕ—мирлĕ майпа тунă килĕшӳсем пулăшнипе кăна пирĕн халăх мирлĕ пурăнма тата малалла чечекленсе пыма пултарать. Кунта уйрăмах çакна кăтартса пани кирлĕ: Совет Союзĕ тытса пыракан политика нимĕç халăхĕн шухăшĕсене тивĕçтерет».

Германипе кӳршĕллĕ çĕршывсенчи, гитлерла агрессирен сиен курнă çĕршывсенчи общественность Совет правительствин нотине тата Мускавра пулса иртнĕ калаçусене Германи милитарисчĕсен çĕнĕ агрессиллĕ ĕçĕсене сирсе яма пултаракан утăм тесе шутлать. «Германире милитаризмла вăйсем пуçĕсене çĕклеме пултарас хăрушлăх пур чухне,—тесе çырать Венгри хаçачĕ «Сабад неп»,—эпир хамăра пĕтĕмĕшпех хăрушсăрлăхра тесе шутлама пултараймастпăр. Пайланса тата империалистсем оккупацилесе тăракан Германи пулнă чухне çак хăрушлăх çаплипех сыхланса юлать. Совет Союзĕ Германи ыйтăвне демократиллĕ никĕс çинче татса парас тĕлĕшпе çине тăрса тата çирĕппĕн тытса пыракан политикăна эпир хамăрăн пĕтĕм вăйпа пулăшса пыратпăр». «СССР сĕнĕвĕсене йышăнни,—тесе çырать Францири «Юманите» хаçат,—мир ĕçĕнче çĕнĕ самана пуçласа яма пултарать».

Г. М. Маленков юлташ кăтартса панă тăрăх, «Германи кун-çулĕ Германи халăхĕ аллинче». Мускаври калаçусем çинчен Хĕвелтухăç тата Хĕвеланăç Германири хаçатсем çырнинчен çакă курăнать: Германи халăхĕ наци ыйтăвне татса парас ĕçре Европăра мире сыхласа тăрас ĕçре хăйĕн умĕнче мĕнле ответлăх тăнине ăнланать. Совет Союзĕ мирлĕ договор тăвасси çинчен, Пĕтĕмĕшле Германин Вăхăтлăх правительствине туса хурасси çинчен, пĕтĕм Германире ирĕклĕ суйлавсем ирттересси çинчен панă сĕнӳсене йышăнса, Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати хăйĕн решенийĕнче «пирĕн нумай асап тӳснĕ халăх халех ĕнтĕ, юлашкинчен, пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, мире юратакан, демократиллĕ Германи туса хурасси патне тата мирлĕ договор тăвасси патне илсе пыракан çул çинче тăтăр тесе, Хĕвелтухăçĕнчи тата Хĕвеланăçĕнчи мĕнпур нимĕçсене пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме» чĕннĕ. Халăх палати çакна паллă тăвать: Совет Союзĕ Германи çине туслăн пăхни, Совет правительстви репатриацисем илме чарăнасси çинчен тата Демократиллĕ Германи Республикин вăрçă хыççăнхи финанспа экономика тĕлĕшĕнчи обязательствисене çăмăллатасси çинчен йышăннă решенисем Демократиллĕ Германи Республикине—Германири мире юратакан мĕнпур вăйсен тĕревне—вăйлатаççĕ.

Германи халăхĕн хăйĕн çĕршывĕн пĕрлĕхĕшĕн тата мире тĕреклетессишĕн кĕрешни пайланса тăракан Германирен çĕнĕ вăрçă вучахĕ туса хума хăтланакан империалистсен каварне чарса лартас ĕçре хăватлă вăй пулса тăрать.

ИНДИПЕ ПАКИСТАН ХУШШИНЧЕ КАШМИР ÇИНЧЕН ПУЛСА ИРТНĔ КАЛАÇУСЕМ

Нумаях пулмасть Дели хулинче Инди премьер-министрĕ Неру тата Пакистан премьер-министрĕ Мохаммед Али хушшинче пулса иртнĕ калаçусем Кашмир княжестви çинчен тăракан ыйтăва Индипе Пакистан халăхĕсемшĕн те, Кашмир халăхĕшĕн те усăллă татса пама май пулнине кăтартса панă. Кашмир ыйтăвне татса парассине империализмла державăсем, уйрăммăн илсен, Пĕрлешӳллĕ Штатсем, ултă çул хушши кансĕрлесе тăнă. Инди, Пакистан тата ООН хӳттинче тăракан Кашмир «никама пăхăнманлăхĕн» пĕркенчĕкĕпе витĕнсе, Пĕрлешӳллĕ Штатсем княжество территорине хăйсен çарĕсене илсе кĕртесшĕн пулнă, унта Америка çарĕн бази туса хума тăрăшнă. Çавăнпа та Кашмир империализмла хирĕçӳсен тĕп вырăнĕ пулса тăнă.

Индипе Пакистан хушшинче тунă килĕшӳ империализмла державăсен ирсĕр ĕçне çапса хуçать. Çак килĕшӳ тăрăх, Кашмир малашлăхĕ çинчен тăракан ыйтăва Кашмир халăхĕн хăйĕн татса памалла. 1954 çулхи апрель уйăхĕ тĕлне плебисцит (халăхран ыйтса пĕлес ĕçе) ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен администратор уйăрса лартмалла. Ăна ООН администраторĕ кăтартса панă тăрăх уйăрса лартмаççĕ, вăл пĕчĕк державăсенчен пĕрин представителĕ пулса тăрать.

Нерупа Мохаммед Али премьер-министрсем йышăннă решение Инди, Пакистан тата Кашмир халăхĕсем ырласа йышăнчĕç. Кашмир премьер-министрĕ Бакши Гулев Мохаммед çак килĕшĕве пĕр сăмахсăрах йышăнни çинчен пĕлтернĕ. Вăл уйрăмах асăннă килĕшӳре Кашмир ыйтăвне урăх çĕршывсем хутшăнмасăр йĕркелеме, Джамму тата Кашмир княжествисене пĕрлешнипех хăварма, плебисцит ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен администратора уйăрса лартас енĕпе халăха хăйне ирĕк пама килĕшни питех те кирлĕ хаклă ĕç пулнине палăртать.

Çавăнпа та Индипе Пакистан хушшинче тунă килĕшӳ çине ют çĕршывсенчи империализмла ушкăнсем мĕншĕн юратмасăр пăхнине ăнланма пулать ĕнтĕ. Анчах буржуалла хаçатсем те, ирĕксĕр пулсан та ĕнтĕ, Кашмир ыйтăвне ют çĕршывсем хутшăнмасăр татса памалла тунине лайăх пулни çинчен çыраççĕ. Çавăн пек, Англире тухса тăракан «Санди таймс» хаçат çапла çырать: «Нумай çулсем хушшинче пирвайхи хут хăшпĕр прогресс тунă».

Индипе Пакистан хушшинчи килĕшĕвĕн пĕлтерĕшĕ çаканта пулать: вăл икĕ çĕршыв хушшинче пысăк хирĕçӳсенчен пĕрне пĕтерме пулăшать. Çак хирĕçӳсене империализмла державăсем нумай çулсем хушши чĕрре кĕртсе пыма тăрăшнă. Çапла майпа вĕсем Индипе Пакистанра хăйсен влиянине вăйлатасшăн пулнă. Пакистанри Коммунистсен партийĕн руководстви çакна паллă тăвать: «Индипе Пакистан правительствисен пуçлăхĕсем çак тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа татса парассишĕн тăрăшнине пур майсемпе те саламлас пулать. Лару-тăрусен аталанăвĕнче çĕнĕ ушăну пулни çакна пĕлтерет: ахаль çынсем икĕ çĕршывра та миршĕн тата туслă сыхăнусем тытассишĕн тăрăшаççĕ. Тĕрĕссипе ку вăл икĕ халăхăн таса ĕмĕчĕсем çĕнтерни пулса тăрать».

Тĕнчери прогрессивлă общественность, Индипе Пакистан хушшинчи килĕшĕве саламласа, ăна Кашмир ыйтăвне татса парас ĕçре малтанхи, анчах пысăк утăм пулса тăрать тесе, çавăн пекех тата Азире мир ĕçне тĕреклетме пулăшакан ĕç пулать, тесе шутлать.

АМЕРИКА ЯПОНИЕ ХĔСЕТ

Августăн 21-мĕшĕнче Токиора «пĕр-пĕрин хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе ĕçлекен управлени» тенĕскерĕ енĕпе пулăшу парасси çинчен пыракан калаçусем чарăнса ларнă хыççăн, Пĕрлешӳллĕ Штатсем Японие вăрçă ĕçне хатĕрленессине хăвăртлатас, уйрăммăн илсен, Японин «хăрушсăрлăх çарĕсен» йышне ӳстерес тĕлĕшпе Японие хытăрах хĕсме пуçланă. Август уйăхĕн пуçламăшĕнче США государство секретарĕ Даллес Японие пырса премьер-министр Иосидăпа калаçусем ирттернĕ чухнех, «Нью-Йорк таймс» хаçат çырнă тăрăх, Япони вăрçа хатĕрленессине «вăйлатма тăрăшман пирки» кăмăлсăр пулнине палăртнă. Даллес, тесе çырнă «Нью-Йорк таймс» хаçат, Иосидăпа калаçусем ирттернĕ чухне хăшпĕр йывăрлăхсем тĕл пулнă.

Çак йывăрлăхсем Токиора калаçусем пынă вăхăтра пур енчен те палăрнă. Япони правительстви Америка паракан укса-тенкĕрен пĕр пайĕпе Японин экономикăлла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре усă курасшăн пулнă. Çакă вăл ирĕксĕр тунă утăм пулнă. Пĕрлешӳллĕ Штатсем Японие ирĕксĕрлесех çар программи йышăнтарма çĕршыв экономикишĕн йывăрлăх кăларса тăратнине Японири влаçра тăракан ушкăнсем шута илмесĕр тăма пултараймаççĕ. Тата Японирен США-н вăрçă планĕсене пурнăçлама пулăшакан çĕршыв туса хурас политикăна хирĕç Япони халăхĕ массăллăн тăни Токиора тата ытларах пăшăрхантарать. Ют çĕршывсенчи буржуалла хаçатсем Японире Америка оккупацине тата вăрçă хатĕрленессине хирĕç кĕрешесси ӳссе пыни çинчен çыраççĕ. «Амеко, кайăр!» (янкисем, килĕрсене тухса кайăр) текен лозунг,—тесе çырать Англи бюллетенĕ «Форин рипорт»—...кучухнехи Японире çынсене пĕрлештерекен тата хăрушă лозунг пулса тăрать».

Уцинадара, Асама тăвĕн районĕнче тата ытти районсенче Америка çар базисем тунине хирĕç Японире протестсем туни çинчен асăнса, бюллетень çапла пĕлтерет: японецсем Пĕрлешӳллĕ Штатсен политикине хирĕç ытларах та ытларах тăтăклăн тăраççĕ. Американецсемпе ирттерекен калаçусенче Япони правительстви тытнă позици общественность шухăшĕ хĕснинчен килнĕ те ĕнтĕ. Дзидзи Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсем ультиматум панă, японецсем экономика тĕлĕшпе пулăшу парасси çинчен тăратнă ыйтăва кун йĕркинчен кăларма хушнă.

Калаçусем чарăнса ларнă хыççăн Америка хĕсни, Японири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Иосида правительствине хăшпĕр влияни панă та ĕнтĕ. «Ниппон таймс» хаçат çапла пĕлтернĕ: Япони правительстви «хăрушсăрлăх çарне» 20 пин çын таран ӳстерме палăртать. Çавăн пекех Япони çарне ӳстересси çинчен США-на план тăратаççĕ. Хаçатсем çакна кăтартса параççĕ: Японире вăрçа хатĕрленес ĕçе вăйлатасси çинчен малашне калаçусене Япони финанс министрĕ Огасавара ирттерет. Вăл часах Вашингтона тухса каять.

Япони халăхĕн анлă массисем нацин никама пăхăнманлăхĕшĕн, Америка пусмăрне хирĕç хăйсен кĕрешĕвне вăйлатаççĕ.

С. ИВАНОВ.

ООН Генеральнăй ассамблейин çиччĕмĕш сессийĕ

Политикăлла комитетра

НЬЮ-ЙОРК, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине Политикăлла Комитет Корея ыйтăвĕ тăрăх политикăлла конференци ирттерес ыйтăва тепĕр хут сӳтсе явма тытăннă. Комитета тăратнă тĕрлĕ сĕнӳсем çинчен чылай делегатсем хăйсен шухăшне каласа панă.

Кун хыççăн сасăлама тытăннă. Председатель Мунис 15 çĕршыв резолюцине сасăлама сĕннĕ. Ку резолюци тăрăх, конференцире Корейăри вăрçа хутшăннă çĕршывсем кăна пулма пултараççĕ. Саудовски Аравипе Ливан представителĕсем: конференцие Индипе Совет Союзне хутшăнтарасси çинчен калакан резолюцие малтан сасăламалла, тесе сĕннĕ. Анчах председатель ку сĕнĕве сирсе янă.

15 держава резолюцийĕшĕн 42 сасă панă. 5 сасă хирĕç пулнă, 12 делегаци нихăш майлă та сасăламан. Инди сасăлама хутшăнман.

Кун хыççăн Политикăлла комитет политикăлла конференцие Совет Союзне хутшăнтарасси çинчен калакан резолюцие 55 сасăпа ырланă. Çак резолюцие хирĕç 2 сасă пулнă, 2 делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Унтан политикăлла конференци ĕçне Индие хутшăнтарасси çинчен калакан резолюцие сасăлама тăратнă. Çак резолюцишĕн 27 делегаци сасăланă, 21 делегаци хирĕç пулнă, 11 делегаци нихăш майлă та сасăламан. Инди сасăлама хутшăнман.

Кун хыççăн Совет Союзĕн резолюцине йышăнасси çинчен сасăланă. Ăна хирĕç 41 сасă, майлă—5 сасă пулнă. 13 делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Кун хыççăн Политикăлла комитет Бирма, Инди, Индонези, Либери тăратнă, Инди тӳрлетĕвне кĕртнĕ резолюцие йышăннă. Çак резолюци «генеральнăй секретаре çиччĕмĕш сессин виççĕмĕш пайне тăратнă сĕнӳсем çинчен тата вăл асăннă ыйту тăрăх панă сĕнӳсем çинчен, Генеральнăй Ассамблея протоколĕсемпе пĕрле, Китай Халăх Республикин Центральнăй халăх правительствине Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствине пĕлтерме, кирлĕ пулсан тата доклад тăратма хушать».

Инди тӳрлетĕвĕнче: генеральнăй секретарĕн результачĕсем çинчен Генеральнăй Ассамблейăна доклад тăратмалла текен вырăна кăларса пăрахмалла, тесе каланă. Çак резолюцишĕн 54 делегаци сасăланă, 4 делегаци хирĕç пулнă, 2 делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Сасăланă хыççăн чылай делегатсем хăйсем мĕнле сăлтавпа сасăлани çинчен каласа панă. Сăмахран, Мексика представителĕ 15 çĕршыв резолюцийĕ вырăнлă пулма пултарас пирки иккĕленсе каланă. Бирма представителĕ: политикăлла конференцире 15 çĕршыв резолюцийĕнче каланинчен ытларах çĕршывсем пулмалла, тенĕ.

Çавăнпа комитет ларăвĕ хупăннă.

Студентсен Пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ

ВАРШАВА, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Варшавăра студентсен Пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ уçăлнă.

Кăнтăрла шăп 12 сехетре сăнакансем тата нумай йышлă хăнасем тĕрлĕ çĕршывсен ялавĕсемпе тата мир ялавĕсемпе илемлетнĕ физкультура институчĕн пысăк залне пухăннă.

Ларусен залĕнче çавăн пекех тата миршĕн кĕрешекен паллă деятельсем нумай. Вĕсем хушшинче—Польша Халăх Республикин Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Циранкевич, Польша столицинчи общественность представителĕсем.

Конгреса уçнă чухне студентсен Пĕтĕм тĕнчери союзĕн президенчĕ Бернард Береану саламлă сăмах каланă.

Польша столицинчи общественность ячĕпе конгресра Варшава хулинчи Халăх Рада президиумĕн председателĕ Ежи Альбрехт салам каланă. Вăл конгреса пухăннисене мĕнпур çĕршывсенчи студентсен организацийĕсене пĕр-пĕрне ăнланса тата пĕр-пĕринпе тачă çыхăну тытса ĕçлеме ăнăçлăх сĕннĕ.

ВАРШАВА, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Студентсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн ĕнер кăнтăрла пулса иртнĕ ларăвĕнче конгресăн çакăн пек йĕркине йышăннă:

1. «Студентсен кучухнехи пурнăçĕ тата Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕпе студентсен организацийĕсем умĕнче студентсен ыйтăвĕсемпе интересĕсене тивĕçтерессишĕн кĕрешес тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен»—Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕн исполкомĕн докладчĕ.
2. Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕн советне суйласси.

Кун йĕркине йышăннă хыççăн Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕн исполкомĕ ячĕпе конгресра Студентсен пĕтĕм тĕнчери союзĕн генеральнăй секретарĕ Д. Берлингауэр доклад тунă.

Конгресс хăйĕн ĕçĕсене малалла туса пырать.

ТĂВАНЛĂХ ЮРРИ

Музыкине И. СТЕПАНОВАН. Сăмахĕсем Н. ЕВСТАФЬЕВАН.


Марш темпĕпе
Ю-хать ан-лă А-тăл, шав-лать,
Хă-ват-лă хум-сем хă-ва-лать.
Пи-ре а-ча-ран вăл тă-ван,
Тух-масть у-нăн я-чĕ ас-ран.

Юхать анлă Атăл, шавлать,
Хăватлă хумсем хăвалать.
Пире ачаран вăл тăван,
Тухмасть унăн ячĕ асран.

Туран пăракут ав анать,
Сасси янратать таврана.
Килет вăл тăван Мускавран,
Ун çулĕ—çут тинĕс таран.

Юратнă çĕршывăмăрпа
Иртет вăл мăнаç Атăлпа.
Тăванлă пурнан халăхсен
Юрри илтĕнет ун çинчен.

Илемлĕ мăн Атăл тĕрри,
Янравлă тăванлăх юрри.
Мухтать вăл совет çĕршывне,
Тăван халăхсен туслăхне.

* * *

Ардальон Игнатьев—спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ

Пирĕн землякăн Ардальон Игнатьевăн ячĕ пĕлтĕр пĕтĕм çĕршывра паллă пулчĕ. Çамрăк спортсмен А. Игнатьев Финляндие Пĕтĕм тĕнчери спорт ăмăртăвне кайс умĕн Киевра пулнă ăмăртура 400 метра хăвăрт чупса тухса Пĕтĕм Союзри рекорд турĕ. Çак дистанцие вăл 48,2 секундра чупса тухрĕ.

Тепĕр уйăхран Хельсинкинче Пĕтĕм тĕнчери спорт ăмăртăвĕнче А. Игнатьев 400 метра хăвăрт чупса тухас тĕлĕшпе чĕрĕк финалта рекорда татах лайăхлатрĕ. Вăл финиш патне виççĕмĕш çитрĕ, дистанцие 48,1 секундра чупса тухрĕ. Вăл тепĕр кунне çур финалти ăмăртура çак дистанцие 47,4 секундра чупса тухса пирĕн çĕршывшăн çĕнĕ рекорд тунă.

Хельсинкинчен таврăнсан А. Игнатьев çăмăл атлетсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне малтанхи хут хутшăнчĕ. Вăл çĕршывра паллă спортсменсемпе ăмăртса мала тухрĕ, 400 метра пуринчен хăвăрт чупса тухса, Совет Союзĕн чемпионĕ ятне илчĕ. Çавăн пекех вăл 200 метр ăмăртса чупса иккĕмĕш вырăна тухрĕ, кĕмĕл медаль илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Кăçал А. Игнатьев спорт енĕпе тата пысăкрах çитĕнӳсем турĕ. Россия Федерацийĕнчи çăмăл атлетсен ăмăртăвĕнче вăл 400 тата 200 метра пуринчен малтан чупса тухса пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Юлашки дистанцие вăл 21,4 секундра чупса тухса РСФСР-та çĕнĕ рекорд турĕ.

Кăçалхи август уйăхĕн пуçламăшĕнче А. Игнатьев Совет Союзĕнчи спортсменсен делегацийĕпе пĕрле Румыни столицине — Бухареста кайрĕ. Унта Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен фестивалĕ ячĕпе спорт ăмăртăвĕсем пулнă. Çав ăмăртусене тĕнчери 48 çĕршыври спортсменсем хутшăннă. Бухарестри стадионра А. Игнатьев Совет Союзĕшĕн икĕ çĕнĕ рекорд тунă. Вăл 400 метра 46,8 секундра чупса тухнă. Ун хыççăн вăл 200 метра 21,1 секундра чупса тухса каллех тепĕр рекорд тунă.

Бухарестри ăмăртусенче паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн А. Игнатьева спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ ятне панă.

Çак кунсенче вăл Мускавра Пĕтĕм Союзри çăмăл атлетсен ăмăртăвне хутшăнчĕ. Кунта та паха тĕслĕхсем кăтартрĕ. Хальхинче пирĕн земляк А. Игнатьев икĕ ылтăн медаль илме тивĕçлĕ пулчĕ, икĕ дистанцие хăвăрт чупса тухса СССР чемпионĕ ятне илчĕ. Вăл 400 метра 46,9 секундра, 200 метра 21,2 секундра чупса тухрĕ. А. Игнатьева пула РСФСР команди 4×400 метрлă эстафетăра çĕнтерсе мала тухма пултарчĕ.

* * *

Шкулсем валли

Кăçал республикăри шкулсем валли нагляднăй пособисем, физикăпа хими кабинечĕсене пуянлатма тĕрлĕ приборсем илсе килесси чылай лайăхланнă. Главснабпросăн Шупашкарти магазинĕ кăçалхи сакăр уйăх хушшинче шкулсене пурĕ 758 пин тенкĕлĕх тĕрлĕ нагляднăй пособисем, приборсем сутнă. Ку вăл пĕлтĕрхинчен 200 пин тенкĕ ытларах пулать.

Шкулсенче политехникăлла вĕрентĕве пуçăнма ĕç хатĕрĕсем чылай кирлĕ пулаççĕ. Кăçал шкулсем валли слесарь, столяр ĕç хатĕрĕсем чылай илсе килсе сутнă. Çавăн пекех биологипе естествознани кабинечĕсем валли кирлĕ приборсем нумай илсе килнĕ.

Ялти чылай шкулсенче электричество çук. Çакна пула тĕрлĕ опытсем тăвасси, кино кăтартасси питĕ чăрмавлă пулнă. Кăçал 30 вăтам шкула электростанцисем илсе килсе панă. Унсăр пуçне, 10 шкула киноаппаратсем туяннă, чылай шкулсен проекци фонарĕсем пур. Çакă урокĕсенче вĕренӳ программипе çыхăннă кинопленкăсемпе кĕске фильмсем кăтартма май парать.

Яла радиофикацилени

КАЛИНИНО. Районта колхозла ялсенче радиофикацилесси çултан-çул ӳссе пырать. Кăçал районти сыхăну кантурĕ «Партизан» колхозра 80 киле радио кĕртрĕ.

Халĕ «Новый путь» колхоза радиофикацилес ĕç пырать.

◆

Тӳрлетни

«Коммунизм ялавĕн» 1953 çулхи августăн 28-мĕшĕнчи номерĕнче, Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин айăпĕпе, тырпул пухса кĕртни çинчен калакан сводкăра йăнăш кайнă. Етĕрне районĕ пĕтĕмпе тырпул пухса кĕртнине 96,3 процент тесе вуламалла.

Редактор заместителĕ
М. Н. ЯКИМОВ.

К И Н О

«РОДИНА»—августăн 30-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Киносборник № 35», «Аленький цветочек» тата «Валидуб»; 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Ангел в отпуске».

«УДАРНИК»—августăн 30-мĕшĕнче «[illegible] и Кота».

АНГЛИ КЕНИРЕ ТЕРРОРЛА ĔÇСЕНЕ ВĂЙЛАТАТЬ

ЛОНДОН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Англири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англи çар министерстви колонисен министерствипе консультаци ирттернĕ хыççăн наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăма хирĕç кĕрешессине вăйлатма Кенине çĕнĕ çар чаçĕсем яма йышăннă. Çывăх вăхăтрах Кенине Ланкастерти 49-мĕш çуран çар бригади, Бернард-Каслтаран пĕр батальон, Дуйртан пĕр полк çар тухса каять.

Египет президенчĕ генерал Нагиб пĕлтерни

ЛОНДОН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Каиртан пĕлтернĕ тăрăх, Египет президенчĕ генерал Нагиб «Аль-Мысри» хаçат корреспонденчĕпе калаçнă чухне юлашки вăхăтра мусульманла çĕршывсенче переворотсем пулса иртнĕшĕн империализма сивленĕ. Вăл çак çĕршывсене пĕр фронт туса хума чĕннĕ. Çакăн пек тусан, тенĕ Нагиб, «пирĕн кĕрешӳ ăнăçлăн вĕçленме пултарать».

Империалистсен чыссăр маневрĕсене сивлесе, генерал Нагиб çапла каланă: Персире Мосаддыка вырăнтан кăларни, Мароккăран Мохаммед Бен Юсефа кăларса яни тата Англипе Инди хушшинче договор туни—çаксем пурте «Вашингтонри канашлу» хыççăн пулса иртнĕ ĕçсем пулса тăраççĕ.

«Империализм араб халăхĕсене тата ытти мусульман халăхĕсене кӳнĕ хĕн-хура илес пулсан,—тенĕ Нагиб,—эпир пурте пĕр фронта пĕрлешсен, пирĕн кĕрешӳ ăнăçлă вĕçленме пултарать».

ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ТĔЛĔНМЕЛЛЕ РЕШЕНИЙĔ

АФИНЫ, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Грецире тухакан хаçатсенче премьер-министр Папагос хăй каласа панине пичетлесе кăларнă. Папагос Греци правительстви Корейăри экспедици корпусне пĕр батальон таран ӳстерме решени йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

«Авги» хаçат каланă тăрăх, премьер-министр çапла пĕлтерни политикăна чухлакан çынсене питех те тĕлĕнтернĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-87, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-25, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăçĕ пайĕ—3-96, хуçалăх пайĕ—3-87, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-22.

НТ 09497

Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

Тираж 30.000 экз.